82.Чув.922
А86
114927




# Чăваш
# БУКВАРĔ



Аа Ӑӑ Бб
БЛОКНОТ
Ёё Ӗӗ Жж
Лл Мм Нн
Çç Тт Уу Ӳ
Чч Шш Щщ ъ


Вв Гг Дд Ее
Зз Ии Йй Кк
Оо Пп Рр Сс
Ӳӳ Фф Хх Цц
Ыы ь Ээ Юю Яя

82Чв 922
А86

Т.В. АРТЕМЬЕВА, М.К. ВОЛКОВ, Л.П. СЕРГЕЕВ

# Чăваш
# БУКВАРĔ

Чăваш Республикин
Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви
шкулсенче усă курма ирĕк панă

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2012

УДК 373:811.512.111
ББК 82 Чув.992
А 86

## Уйрăм палăртусем:

 — çырса пурнăçламалли ĕççем

 — хăйсем тĕллĕн шухăшласа пурнăçламалли ĕççем



— сасăсен сăмахри вырăнне каламалла

 — ӳкермелле

■ — хытă хупă сасă

■ — çемçе хупă сасă

● — хытă уçă сасă

● — çемçе уçă сасă

— йĕркине палăртмалла

! — астуса юл

✳ — хăвăрткаларăшсем

**Артемьева Т.В.**
А 86 Чăваш букварĕ: 1-мĕш класс валли / Т.В. Артемьева, М.К. Волков, Л.П. Сергеев. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2012. — 159 с., ил.
ISBN 978-5-7670-1981-6

**УДК 373:811.512.111**
**ББК 82 Чув.992**

**ISBN 978-5-7670-1981-6**

ИНВ № 114927
ЧНИО

© Артемьева Т.В., Волков М.К., Сергеев Л.П., 2012
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2012

# САЛАМ, ТӐВАН ШКУЛӐМӐР!



Хӗвел йӑл-йӑл кулчӗ,
Пӑхрӗ кантӑкран.
Ванюка вӑл курчӗ,
Саврӗ кӑмӑлтан.

Тӑхӑнчӗ, тумланчӗ
Ванюк васкаса,
Шкулалла чуптарчӗ
Савӑнса кулса.

А. Çулӗç









# ХУТШĂНУ




















# КАЛУ. ÇЫРУ



















# ПУПЛЕВ





# ПУПЛЕВ. ТЕКСТ

## Сармантей

(Юмах)

Сармантейӗн сарă чăххи сарă ҫăмарта тунă. Ăна шăши пынă та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Сармантей йӗрет. Сарă чăххи какалать.

* * *

Ёлӗк чух, авал чух,
Асаттесем ача чух,
Аттепеле вăрмана
Каяттăмăр кăмпана.



### Ҫемье

Пӗрре — асатте,
Иккӗ — асанне,
Виҫҫӗ — атте,
Тăваттă — анне,
Пиллӗк — Валя аппа,
Улттă — шăллăм Ҫтаппан,
Ҫиччӗ — эпӗ, Клавье.
Ак пӗтӗм ҫемье.

# ПРЕДЛОЖЕНИ















# СӐМАХ





______



______



______



?

______

______ ______ ______.

______ ______ ______ ______.

______ ______ ______.



______ ______ ______.

______ ______ ______!

# СЫПĂК

















# ПУСĂМ















# ТАВРАРИ САСĂСЕМ















# ПУПЛЕВРИ САСĂСЕМ







?





?

?





?





БИБЛИОТЕКА
ЧРИО
и. 144927

# УÇĂ САСĂ







?

?











?



? ?

? ?

? ?

# ХУПĂ САСĂ



















?



?

























Аа
Уу
А-у-у!
У-а!







А-у-у!

# Уу

*Уу*













# А-а-а!
# У-у-у!
# Ă-ă-ă!



ắ□○□□

○□Ó□



# Ăă

*Ăă*







□○□□○

└_______ _______ _______.

└_______ _______ _______.







| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | ă | | | |
| | ă | | | |
| | ă | | | |
| | ă | | | |





ан на    ун ну    ăн нă

| | | |
|---|---|---|
| ан | ăн | на |
| а\|на | ă\|на | у\|на |
| Ан\|на | ăн\|нă | у\|на\|нă |



□○□○́н



# Нн
*Нн*






□○□○

— Анна, ан!
Анна аннă.


~~а~~ ă


~~а~~ ă


~~ă~~ а



ам ма ӑм мӑ ум му

| | | |
|---|---|---|
| у\|ла | ман | лум |
| У\|ла | ма\|на | мул |
| у\|лӑм | ӑ\|ман | а\|ма |





# Мм
*Мм*





Ула□ӑн 3  .
Ула□ аманнӑ.
Анна ӑна ____ .





| | | |
|---|---|---|
| ат та | ут ту | ăт тă |
| тăн | тун | тан |
| ту\|тă | ту\|лă | тă\|лă |

ут → ăм → утăм

ут → лан → утлан

# Тт

*Тт*









Анна □ăлан утланнă.

— Антун, ут утлан!

Антун ут утланнă.

— Утăм, малалла ут!

тă тăн ту тул тă тăм



| | | |
|---|---|---|
| тăм | Ан\|на | тум |
| тă\|ма | у\|нăн | тум\|ла |
| тă\|ман | ун\|тан | тум\|лан |

















Анна тăнă.
— Анна, тумлан!
Анна тумланнă.
Унтан Антуна тумланма ______ .



ту.ă .ăман .ăм





| | | |
|---|---|---|
| ап па | уп пу | ăп пă |
| пăт | тум | ту\|та |
| туп | тум\|ла | ту\|тă |

ту → пă, ?

пă → та, ?

# Пп

*Пп*










— Аппа, пăтă-ă-ă!
Анна Антуна пăтă панă.
Антун пăтта тутаннă.
Пăтă тутлă пулнă.
Антун лăпланнă.

?

ап тап уп туп ăп тăп
па пат пу пут пă пăт



пу|лă Пă|ла
тă|ман па ↘ лан
ă|ман ? ↗








Атăл анлă.
Унта пулă нума□.
Антун пулла аннă.
Пулă ăман ______.











Пă . а пă . а



аш ша     ăш шă     уш шу

ă|шă     пу|лăш

ă|шăн     пу|лă|шу

шă → л, шă → ?     та → шă, ? → шă

# Шш

*Шш*









Алла, Ануш шăлан татнă.

Анушăн  тулнă.

Аллăн  тулман.

— Ануш, мана пулăш!

ша шан шу шут шă шăп



та|шă
таш|ла
таш|ла|нă

а|кăш

шă → ла
шă → ?











Анна



Ануш аппа  □аланă.
Антун ташланă.
Анна ташлама □ăтаннă.
— Анна, ан □ăтан!
Анна та ташлама тăнă.

?



р○□

ар ра　　ур ру　　ăр рă

| | | |
|---|---|---|
| пăр | у\|ра | у\|рам |
| тăр | пу\|ра | ар\|лан |

п > ар
? > ар

ар > ?
Ра > ?

# Рр

*Рр*








Урамра ăшă.
— Раман, урама ту□!
Шурăпа Раман лашалла
________ .
Раман лаша пулнă.

ă ш ă
○□○

?

ар мар ур пур ăр тăр

пăр ур|па шу|рă

тăр у|ра|па шу|рат

пă → ра ур → ?

? → ра ар → ?



□ó□○□











Антун арман тунă.
Раманăн урапа пур.
— Антун, мана арман пар!
Антун Рамана арман панă.
Раман ăна урапа панă.



ыт ты　　ыш шы　　ыр ры

ы|вăл　　ы|раш　　пы|ран
ыл|тăн　　шы|ра　　шыр|лан

ы́□○□

ты → ră, ?　　ы → ран, ?

# Ыы

*Ыы*





□○□□○□

## Утарта

— Антун, ыран ман пата утара пыр.
Антун утара пынă.
Унта □ăл ____ пулăшнă.
А□лашш○ ăна пыл панă.

ш . в　　ты . ă　　ыра .

ыр пыр   ыл пыл   ыт тыт

| | | |
|---|---|---|
| ты \| мар | ыт \| ла | ы \| рă |
| тат \| ма | ăн \| нă | ты \| рă |
| тыт \| ма | пул \| нă | ыл \| тăн |
| туп \| ма | шăн \| нă | тул \| нă |








## Ыраш

Анна аппа тырă □ырнă.
Унăн ____ ăннă.
Ăна Шурăпа Раман пулăшнă.
Тырă турттарнă.
Шурăпа Раманăн та ____ ăннă.
Ыраш ытла ăн□а пулнă.













□○В

ва вар ву вут вă вăт

шав выртвула

шав → ла / лă ы|вăн ву|лам

ы|вăл тă|ван

# Вв

*Вв*





○□○□



## Ан шавла!

Ануш аппа ывăннă.

Вăл □ анма выртнă.

Павăлпа Анна шăппăн вуланă.

— Мăрмăр, ан шавла!



р ? в

у . ам . ырăн шăпă . ы . ăл

ав ва    ув ву    ăв вă    ыв вы



| | | |
|---|---|---|
| лав | ы\|вăт | а\|ван |
| тав | ы\|вăл | вă\|рăм |
| шав | тă\|вăл | вăр\|ман |













## Шывра

Шыв ăшă та тăрă.
Шывра ытла та аван.
Павлушпа Раман шывра.
— Павлуш, ан шăмпăлтат!

тă та
у вăл рăн

тăн ша
ыл ла па



х ○ □ ○́ х

ха хам  ху хут  хы хыв

| | | |
|---|---|---|
| хум | у\|хă | ху\|ра |
| хут | у\|лăх | ху\|ран |
| тум\|ла | ху\|ла | ху\|рăн |
| тум\|хах | ху\|лă | ху\|ра\|ма |

# Хх
*Хх*







ула
хура
шурă



## Улăхра

Павăл улăха аннă.
Вăл хур пăхнă.
Анна ăна пулăшма пынă.
Вăл ___ хулăпа хăваланă.
— Анна, хуртан ан хăра!

___хур ___хурăн ___хуран

ах ха ух ху ăх хă ых хы

| | | |
|---|---|---|
| тух | хур | хă\|на |
| хут | хыр | хă\|мăл |
| хурт | хă\|лат | хăм\|ла |
| ху\|ла | хă\|мăр | тă\|хăн |








## Вăрманта

Павăлпа вăрманта пултăмăр.
Хурăнлăхра  шырарăмăр.
Хырлăхра  татрăмăр.
Хутăш вăрманта  тупрăмăр.
Унтан ăмăртмалла  татрăмăр.









ын ин ыр ир ыш иш

ны ни ры ри шы ши

й

пыр выр пăт

пир вир пит

# И и

*И и*










Ануш аппа пан улми татнă.
Тимур ăна пулăшнă.
Павлуш арман авăртнă.
— Павлуш, пан улми тыт!
Пан улми тутлă-и?



в . р

в . р

Тăр-тăри, тăр-тăри! Тăтăр-и!



пы пи хы хи

п . р п . р х . р х . р

пă|ру тум тум|хах

пă|ши тум|тир ти|ха




## Маттур, Тимуш!

Анна  пăхнă.

— Аппа, пăрăва хамах шăварам-и?

Тимуш пăрăва ăшă шывпа шăварнă.

Унтан вăл ăна утă панă.

— Маттур, Тимуш, — мухтанă Анна.

    

   ?



ат та  ам ма  ал ла

ет те  ем ме  ел ле

а|тă  Ан|на  шав|ла

ат|те  ан|не  шев|ле

ат|тем  ан|нем  хит|ре

# е (э)

*е*






витр .





?

**Парне**

— Марине маттур.

Вăл хитре  тунă.

Ăна  парам.

— Атте, мана та пар!

шав ла ра  шев ле ре

эп пе    эм ме    эт те



э|тем    э|реш    эр|не
э|мел    Эн|тип    э|пир
Эр|хип    Эн|три    Эл|пи





# Ээ

*Ээ*








. р . шм . н

## Тавах, аппа!

Элпи хуларан тавраннă.
Амăшне вăл тутăр панă.
Тутăр хитре.
Энтип валли унăн вăлта пур.
— Тавах, аппа! — тет Энтип.

т . м
. тем
п . р
. пир

е ? э





| | | |
|---|---|---|
| ăл лă | ăн нă | ăр рă |
| ĕл лĕ | ĕн нĕ | ĕр рĕ |

| | | |
|---|---|---|
| вăр | ва\|тă | пăл\|тăр |
| вĕр | вĕ\|тĕ | пĕл\|тĕр |
| вĕ\|рет | вĕ\|тет | пĕ\|ле\|тĕр |

# Ĕĕ

*Ĕ ĕ*








## Пулăра

Хĕвел тухман. Таврара шăп.
Хĕветĕрпе Павлуш пулăра.
Хĕветĕр  тытнă.
Павлушăн вăлтине  ле□нĕ.
Пулăра ларма мĕн тери аван!

## Мĕн ытлашши?



пăр вăр тăм шăл
пĕр вĕр тĕм шĕл



ĕм | тă р | вă | рă
тĕм | тă | рă | вĕ | ри
ĕ | мĕт | тĕ | рĕ | вĕ | рен













Марине амăшĕ тĕрĕ тĕрлет.
Тĕрри питĕ хитре.
Ĕшне тулли хĕрлĕ .
Тавралла шурă хурăн□ем.
Унтах шĕшкĕ тĕмĕ□ем.
— Анне, лĕпĕш тĕрлем-и?

? Амăшĕ мĕн тĕрленĕ?

____ тĕрĕ
шурă
хитре
хĕрлĕ

?






ас эс ăс ыс ис
са се ёс сы си

сă|вă сă|мах у|сă
Сĕ|ве си|мĕс пу|сă
сы|вă сĕ|лĕ су|ха

---

# Сс
*Сс*













## Сухара

Славăн ашшĕ сухара.
Вăл ыраш пуссине сухала☐.
Ывăлĕ те ашшĕпе пĕрлех.
— Атте, эпĕ те сухалам-и?
— Лар ман вырăна!

са ва тă ла ша па ?

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| са | се | сă | ас | ăс |
| сан | сен | сăр | эс | ĕс |



сы|вă
си|вĕ
си|вĕт|рĕ

ăс|та
хи|сеп|лĕ
хи|сеп|лет
















## Туссем

Сантăрпа Тимуш пĕр тантăш.
Сантăр улттăра. Тимуш та улттăра.
Вĕсем питĕ туслă.
Туссем ра□ета тăвасшăн.
— Сантăр, эсĕ савала. Эпĕ сăрлам.



тус — лă, лаш

ăста — ла, ?





| | | |
|---|---|---|
| ак эк | ăк ĕк | ык ик |
| ка ке | кă кĕ | кы ки |

| | | |
|---|---|---|
| сак | кас\|ка | вă\|кăр |
| сик | кĕс\|ке | мĕ\|кĕр |
| тĕк | кĕс\|мен | тĕ\|кĕр |

# Кк
*Кк*



## Автан

Пирĕн пысăк автан пур. Вăл мă□не тăсса: «Кики-рик-ку!» — тет. Киккирикĕ хĕрлĕ. Ури тĕклĕ. Сăмси шĕвĕр.

Сирĕн автан мĕнле?



### Кусем мĕнсем?

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| карăк<br>кăркка | ? | вăкăр<br>пакша | ? | пĕтнĕк<br>хупах | ? |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ка | кĕ | ĕк | ак | ик |
| кат | кĕт | сĕк | сак | сик |



| | | |
|---|---|---|
| кат\|ка | каш\|кăр | кăм\|па |
| кăш\|ман | ку\|рак | пу\|рак |
| кĕс\|мен | кĕ\|рĕк | Ве\|рук |






## Кăмпа

Верукпа кăмпара пултăмăр. Эпĕ хĕрлĕ кăмпа татрăм.

Ытла хитре вĕсем. Тунисем вăрăм. Шлепкисем пысăк.

Верукăн кăмписем вĕтĕ.

— Аван кăмпасем тупнă эсĕ, — тет анне Верука.

— Манăн кăмпасем тата хитререх! — тетĕп эпĕ аннене.

— Шăна кăмпи татнă вĕт эсĕ, — терĕ анне.






Ве / ? > рук

пу / ? > рак



| | | |
|---|---|---|
| у \| ла | ту \| ră | пу \| лăм |
| ӳ \| ле | тӳ \| рĕ | пӳ \| лĕм |
| хуп \| ла | ӳп \| ре | ту \| сăм |
| ӳп \| ле | уп \| ра | тӳ \| сĕм |



# Ӳ ӳ
*Ӳ ӳ*










## Кӳлĕ

Улăхра пысăк кӳлĕ пур.
Ун тавра — хурăнлăх.
Шыв хĕррипе хăмăш ӳсет.
Кӳлĕ тарăн, шывĕ тăрă.
Эпир кунта шыва кĕретпĕр.
Кӳлĕре кимĕпе ишме те аван.

| | | |
|---|---|---|
| у\|хă | тус | у\|лăм |
| ў\|хĕ | тўс | ў\|лĕм |
| у\|сă | ку\|лă | ту\|рам |
| ў\|сĕм | кў\|лĕ | тў\|рем |








## Ўссен эсĕ кам пулатăн?

Павлуш ўссен тухтăр пуласшăн.

— Манăн капмар пўртсем тăвас килет, — тет Атнер.

— Эпĕ шутламан-ха, — тет Марук.

Эсĕ ўссен кам пуласшăн?

## Хăшĕ кам пуласшăн?



Атнер



Павлуш



Марук











ас́ ес́ ěс́ ус́ ыс́
кас́ с́ес́ кěс́ пус́ шыс́

су | ха с́у | мăр кěтӳ — с́ě
с́у | ха сис ěм сухa с́ă
с́ӳ | хе с́ис ěм атă с́ă

# Çç

Ç ç



## Аслати

Аслати хыт кěмсěртетрě,
Асатте пек мăкăртатрě.
— Килсене вěс́терěр, — терě.
Те шӳтлерě, те хăратрě.

В. Харитонов

## Çуллахи с́умăр

Хěвеле пěлěтсем хупларěс́. Тавралăха тěксěм сăн с́апрě.

Çил кашласа иртрě. Çине-с́инех с́ис́ěм с́ис́рě. Аслати авăтрě. Шалкăм с́умăр с́ума пус́ларě.

Çуллахи с́умăр ăшă. Çумăр хыс́с́ăн сывлăш ус́ă.








## Ваттисемпе мăнукĕсем

— Кукаçи, иксĕмĕр арман тăвар-и? — тет Çемен.

— Тăвăпăр, мăнукăм, ăсталăпăр, — тет кукашшĕ.

— Хăçан çăмах пĕçерĕпĕр? — ӳкĕтлет кукамăшне Çинук.

— Пĕçерĕпĕр, пепкем, пĕçерĕпĕр, — тет кукамăшĕ.

Кукашшĕпе Çемен арман ăсталаççĕ.

Кукамăшĕпе Çинук çăмах пĕçереççĕ.














| ач ча | ăч чă | ěч чě |
|---|---|---|
| а\|ча | чě\|лě | ча\|на |
| ар\|ча | чě\|пě | ча\|как |
| пěр\|чě | чě\|кеç | чěл\|хе |

# Чч

Чч



## Чакакпа чěппи

Чакак чěппине сыхă пулма вěрентет тет. Çинě чухне иртен-çӳрен чěр чунсенчен асăрханма сěнет:

— Эсě виççě сăх та пěрре çавrănса пăх, — тет.

— Сăхмассерен пăхсан мěн пулě-ши? — тěпчет чěппи.

— Ара, эсě манран та ăслăрах-çке, — тет чакак.

| | | |
|---|---|---|
| н̸ л  | р̸  | т̸ ч  |








## Ӑлха ҫыхни

Эпӗ анне пуҫланӑ ӑлхана ҫыхма тытӑнтӑм. Ҫыхма пӗлмесӗр ҫипписене ӑлхантарса пӗтертӗм. Анне мана:

— Ачам, малтан ҫыхма вӗрен, унтан тин ҫыхтарӑп, — терӗ.

**! Ваттисен сӑмахӗсем.**

Ӗҫчен алӑ ӗҫ тупнӑ.
Аллупа ӗҫле,
пуҫупа шухӑшла.

**Сыпӑксенчен сӑмахсем ту.**



| | |
|---|---|
| чар — | — шав |
| ӑл — | — рӑш |
| ӑ — | — ха |



ăн ăнь ăл ăль ат ать

су | пăнь
мă | кăнь
шу | кăль
ку | кăль

са | на
сă | нать
çу | нат
у | сă | нать

су́пăнь

# Ъ ь








## Тулă пуссинче

Марукпа амăшĕ тулă пуссипе пыраççĕ.

— Анне, мĕншĕн пучахсем пĕрисем çĕрелле усăннă, теприсем çӳлелле пăхаççĕ? — тĕлĕнет хĕр ача.

— Тулли пучах яланах çĕрелле усăнать. Пушши кăна пуçне каçăртать.



Тулĕ — тулă, ăшĕ — пулă.

| ал аль | ӑн ӑнь | ат ать |
|---|---|---|
| хал | мӑ \| кӑл | у \| тать |
| халь | мӑ \| кӑль | ҫӳ \| рет |
| са \| хал | ту \| рат | ку \| рать |
| а \| халь | ту \| рать | ки \| лет |







## Чи тутли

Пĕчĕк Лена тӑрмашать,
Кукамӑшне пулӑшать.
Ҫатми ҫине ҫу сĕрчĕ —
Пĕҫерет-мĕн икерчĕ.
— Эп кун пеккине курман,
Питĕ тутлӑ-ҫке... Аван!.. —
Терĕ Лена савӑнса
Икерчĕне тутансан.
Пуплешет ват ҫын унпа:
— Ху пĕҫернĕ, ҫавӑнпа...

А. Юман



**Хирĕҫле пĕлтерĕшлĕ сӑмахсене ҫыхӑнтар.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| пĕчĕк | ҫамрӑк | ĕҫчен | пушӑ |
| ватӑ | пысӑк | тулли | кахал |



йы́тă

ай йă | ей йĕ | ый йы

йăх
у | йăх
ла | йăх

хăй | ма
йă | ва
ый | хă

йĕ | рет
йă | лăм
кай | рăм

# Йй
*Йй*






## Упа çури



Шăтăкра ирех çари
Çухăрать упа çури.
Ăна амăшĕ çĕрле
Вăратман-мĕн ыйхăран,
Утара хăйпе пĕрле
Пыл çиме илсе кайман.

Н. Карай



**Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене çыхăнтар.**

кулать | пуплет
макăрать | ахăлтатать
калаçать | йĕрет

* Шăрăхăн шăрши çук, шăршăн шăрăхĕ çук.

| | | |
|---|---|---|
| йӑм\|ра | ту\|йӑм | йӑ\|ла |
| йӗр\|ке | кӑ\|вайт | йӑ\|ва |
| сай\|ра | йӗл\|ме | ка\|йӑк |
| уй\|ран | йӗл\|тӗр | йӑ\|ран |








## Ула такка



Хӑвӑла хӑйса шаккать
Пӗчӗкҫӗ ула такка.
Тен, кӗресшӗн йӑвине?
Уҫаймасть-ши алӑкне?

## Йӑмра



Ҫыр хӗрринче ӳсет йӑмра —
Хӑй чӗркуҫҫи таран шывра.
— Тух хӑвӑртрах, йӑмра,
шывран,
Шӑнса эс чирлӗн ҫаруран...

### Мӗнсем аташса кайнӑ?



| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| йӑмра | | кӑйкӑр | | чие | |
| ӑвӑс | ? | чана | ? | ҫӗмӗрт | ? |
| ӑсан | | иҫӗм | | чарлан | |



юпа́

ут ют ух юх ун юн

| | | |
|---|---|---|
| у\|па | кай | ул\|тав |
| ю\|па | ка\|ю | юл\|таш |
| ю\|рӑ | хӑ\|ю | юр\|лать |

# Юю (йу)

*Юю*



## Икӗ юлташ

Икӗ юлташ вӑрманпа пынӑ. Вӗсен умне упа сиксе тухнӑ. Пӗри йывӑç çине хӑпарса кайнӑ. Тепри çӗре выртнӑ та вилнӗ пек пулнӑ. Упа ӑна питӗнчен шӑршласа пӑхнӑ та пӑрӑнса утнӑ.

Упа кайсан тепри йывӑç çинчен аннӑ.

— Упа сана хӑлхунтан мӗн каларӗ вара? — тӑрӑхласа ыйтнӑ вӑл.

— Юлташӗсене хӑрушлӑхра хӑваракансем начар çынсем тесе хӑварчӗ, — тавӑрнӑ лешӗ.

Л. Толстой

юн ню ют тю юл лю



ю[йу] юн|кун юл|таш

ю[у] А|нюк И|люш

А|нук Пав|луш




## Юр кĕлетке



Йăваларăм, йăваларăм,
Юр кĕлетке купаларăм.
Шăпăр патăм аллине,
Кишĕр — сăмса вырăнне.
Пуç çинче вара — витре.
Пулчĕ тусăм пит хитре.

Л. Николаева

! Мим-мим Мĕкĕте,
Тапса кала шăпăрна!
Пирĕн Анюк юрлатăр,
Пĕчĕк Ванюк ташлатăр.

**Сыпăксенчен сăмахсем ту.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| вит | пăр | çа | шĕр |
| шă | ре | ки | рăк |





юн ню юр рю юл лю

ю|хăм хă|ю ю|ман

юх|нă хă|ю|лăх ю|мах

ю  

Ва|нюк А|нюк И|люш





Йĕкĕр-йĕкĕр йĕкĕрпи,
Вăхăт çитĕ — шăкăрпи.
Эп ӳсетĕп виç çĕр çул.
Сумлă эпĕ халăхра,
Кирлĕ пит хуçалăхра.

В. Ахун

## Юман

Чăваш халăхĕ юмана авалтан юратнă. Юман çинчен вăл юрăсем, юмахсем хывнă, паттăр ывăлĕсене Юман ят панă.

Юман — питĕ çирĕп йывăç. Вăл шывра та çĕрмест. Унăн вуллипе пăрахутсем, вакунсем тунă çĕрте усă кураççĕ.

ал ял аш яш



| | | |
|---|---|---|
| а\|ка | у\|яв | па\|ян |
| я\|ка | ту\|я | ту\|ян |
| яш\|ка | су\|я | ян\|кăр |

яла́в

# Яя (йа)

Я я








## Пирĕн ял

Пирĕн ял илемлĕ вырăнта ларать. Ял çумĕпе Энĕш юхса иртет. Аякра та мар вăрман. Ял урамĕсем тирпейлĕ, йăмраллă. Ял варринче Культура çурчĕ. Юнашарах — икĕ хутлă шкул, ача сачĕ. Пирĕн ял çулсерен ӳссе, çĕнелсе пырать.










## Йĕлтĕрпе

Йĕлме йĕлтĕр
Йăлтăр-ялтăр,
Шуса тухрăмăр
хире.

Юр пĕрчийĕ —
Хĕл мерченĕ.
Эх, илемлĕ-çке
ирпе.

Ярăнсассăн
Пит хавассăн
Таврăнатпăр
килелле.

Таврăнсассăн,
Кăшт кансассăн
Кĕç тытатпăр
кĕнеке.

Мĕтри Васлейĕ

### Кирлĕ сăмахсем хушса çыр.



... хĕл çитрĕ.
Тавралăх ... юрпа витĕнчĕ.
... ачасем йĕлтĕрпе ярăнаççĕ.

шурă
хаваслă
сивĕ

ля ял тя ят ня ян



Яя [йа] ву|лать Я|кур

я [а] вы|лять шыв тап|пи

ка|ять ача тяп|пи




## «Кăвак сурăх»

Тулта сивĕ хĕл кунĕ. Пĕчĕк Илюш алăка ярiех уçса ячĕ те пӳлĕме кĕрсе тăчĕ.

— Уй, мĕн чухлĕ «кăвак сурăх» илсе кĕтĕн эсĕ, — терĕ ашшĕ.

— Мĕнле сурăхсем? — тĕлĕнчĕ Илюш.

— Санпа пĕрле пӳрте кĕнĕ сивĕ сывлăш пирки калатăп эпĕ, — терĕ ашшĕ.

## Хăшĕ мĕн ятлă?











Юра Якур Илюш Валя



не ен пе еп

е|шёл си|ен ен|чёк
ен|теш пи|леш Е|люк
ан|не чи|е еп|ле

Елю́к

# Ее (йэ) (э)

Ее



Мĕншĕн тутлă пан улми,
Мĕншĕн тутлă çĕр çырли,
Мĕншĕн тутлă хурлăхан?
Хамăр лартса тунăран,
Хĕвел тĕслĕ пулнăран.

В. Давыдов-Анатри

## Пĕчĕк пахчаçă

Елюксен пахчи пысăк. Пахчара улмуççисем, чие йывăççисем ӳсеççĕ. Елюк вĕсене тăрăшса пăхать.

Амăшĕ ĕçчен Елюка мухтать:

— Маттур пахчаçă пур пирĕн, — тет вăл.







## Маринепе Энтип

Марине ултӑ ҫулта. Вӑл шкула ҫӳрет. Унӑн Энтип ятлӑ шӑллӗ пур. Вӑл виҫҫӗре ҫеҫ-ха.

Марине — ӗҫчен хӗр ача. Вӑл хӑех чӑлха ҫыхрӗ. Ӑна шӑллӗне парнелерӗ.

Мӗн тери савӑнчӗ Энтип!



### Ваттисен сӑмахӗсем.

Ӑсти епле, ӗҫӗ те ҫапла.
Ӗҫченӗн ӗҫӗ ӑнсах пырать.
Этем ӗҫӗпе ырӑ.



Марье □○□○ ҫӗлет.
Энтип □○□○ ҫырли ӳкерет.

эп ле ел эн не ен



| | | |
|---|---|---|
| ен\|чĕк | кĕс\|ке | э\|рĕм |
| э\|лек | чи\|пер | еп\|ле |
| кĕ\|пе | ан\|не | йĕп\|лĕ |
| чĕ\|ре | ат\|те | те\|лей |



парне́




## Анне

Пире кам ачашшăн
Лăпкать пĕчĕкрен,
Чипер çын тăвасшăн
Çунать чĕререн?

Кам ыррăн, хавассăн
Пурне те пире
Çапла лăш курмасăр
Пăхса ÿстерет?

Кам пултăр? Пĕлеççĕ
Туссем вăл камне.
Вăл — пирĕн телей-çке,
Вăл — пирĕн анне!



А. Ĕçхĕл

 ! Аçу-аннӳне ватлăхра ан пăрах.

а у ы и е э ё о



| | | |
|---|---|---|
| Во\|ва | хор | О\|ля |
| Ко\|ля | ки\|но | ка\|ток |
| у\|рок | паль\|то | конь\|ки |












## Чӗр чун кӗтесӗ

Пирӗн шкулта чӗр чун кӗтесӗ пур. Унта кроликсем те пурӑнаççӗ. Вӗсене Коля Смирнов пӑхать. Вӑл кроликсене апат парать, читлӗхӗсене тасатать.

Кроликсем пахча çимӗç, утӑ çиеççӗ.



Шик-шик шикленет,
Шӗшкӗ кутне кукленет.







конькú

от то ток ор ро хор

хок|кей мо|тор
хă|мăл ор|кестр
тă|вăл кро|лик



## Конькипе

Вĕçсе пырап конькипе,
Хăлхасем хĕп-хĕрлĕ.
Чăр-чар чĕрсе пынипе
Пăр çиййĕ пит йĕрлĕ.

Йăлтăр-ялтăр çиçĕм пек
Йăр та яр пыратпăр.
Алла-аллăн тытăнса
Савăнса ярнатпăр.

А. Çулĕç

Хĕл Мучи ăста иккен:
Кĕперĕсем кĕмĕлтен.

(Пăр.)

то тё  ло лё  фо фё



са|мо|лёт  фор|ма
пи|лот  мон|тёр
шо|фёр  мо|тор



самолёт

---



**ё(о)**

*ё*

## Мӗнле сӑмах ҫырнӑ?

Виҫӗ лётчик тӗл пулчӗҫ те пӗр-пӗрин-пе калаҫса кайрӗҫ.

— Часах вӗҫетпӗр эппин, — терӗ пӗри.

— Тепӗр уйӑхран. Эсӗ мӗнле сас пал-линче вӗҫетӗн? — ыйтрӗ тепри.







— «М» сас паллинче.

— Эпӗ «И» сас паллинче.

— Эпӗ вара «Р» сас паллинче вӗҫетӗп, — сӑмах хушрӗ виҫҫӗмӗш лётчикӗ.

Пӗр уйӑх иртсе кайрӗ. Ҫынсем уява тухрӗҫ.

Сасартӑк тӳпе кӗрлесе кайрӗ. Сенкер тӳпере виҫӗ пысӑк сас палли ярӑнса пырать. Малта «М», ун хыҫҫӑн «И», юлашкинчен «Р» сас палли.

Мӗнле сӑмах пулчӗ?

Л. Кассиль



**Кирлӗ сас паллисем хушса ҫыр.**

Л.ня л.тчик пуласшӑн. Вӑл самол.тпа вӗҫесшӗн.



## Кун ячĕсем

Эрнере çичĕ кун. Кашни кунăн хăйĕн ячĕ пур.

Эрне тунти кунтан пуçланать.

Çак кун эпир пурте шкула килетпĕр.

Эпир ултă кун вĕренетпĕр. Вĕсем çак кунсем: тунти кун, ытлари кун, юн кун, кĕçнерни кун, эрне кун, шăмат кун.

Вырсарни кун эпир канатпăр.

## Эрне

Итле, тимле, Кĕтерне:
Тунти кун пуçлать эрне.
Эсĕ тăнла, тимлĕ пул,
Ун хыççăн — ытлари кун.

Юн кун юрă пуçлăпăр,
Кĕçнерни кун вĕçлĕпĕр,
Эрне кун хыт ĕçлĕпĕр.
Шăмат кун çитсен вара
Çăвăнăпăр мунчара.
Пĕр эрнере — çичĕ кун,
Çиччĕшĕ те лайăх кун.

А. Савельев-Сас



## Тупсăмĕсене туп.

Çеçен хир варринче вата юман, вата юманăн вун икĕ турат, вун икĕ туратра тăватшар йăва, кашни йăвара çичшер çăмарта. (Кунсем, эрнесем, уйăхсем, çулталăк.)



Хура çунат кайăк пур —
Тĕлĕнтермĕш хăват пур:
Пĕр сулать те çунатне —
Çухатать кун çутине.

(Кас пулни.)

| | | |
|---|---|---|
| па ба | пу бу | пи би |
| бан\|ка | бинт | бул\|ка |
| па\|ян | би\|лет | Лю\|ба |
| ба\|ян | пи\|леш | у\|па |
| кăм\|па | ку\|па | уп\|ра |







## Бб

*Бб*

### Буратино

Кам пĕлмест, эп —
Буратино!
Эп — асамçă-пултаруçă,
Аллăмра ман —
ылтăн уçă.



### Библиотекăра

Ёнер эпир библиотекăра пултăмăр.

Пирĕн библиотекарь — Альбина Борисовна. Вăл пире библиотекăпа паллаштарчĕ. Библиотекăра чăвашла, вырăсла кĕнеке нумай.



Ани шурă, вăрлăхĕ хура. 

| па ба | пу бу | пи би |
|---|---|---|
| бан\|ка | бинт | бул\|ка |
| па\|ян | би\|лет | Лю\|ба |
| ба\|ян | пи\|леш | у\|па |
| кăм\|па | ку\|па | уп\|ра |







# Бб

*Бб*

## Буратино

Кам пĕлмест, эп —
Буратино!
Эп — асамçă-пултаруçă,
Аллăмра ман —
ылтăн уçă.



## Библиотекăра

Ĕнер эпир библиотекăра пултăмăр. Пирĕн библиотекарь — Альбина Борисовна. Вăл пире библиотекăпа паллаштарчĕ. Библиотекăра чăвашла, вырăсла кĕнеке нумай.



Ани шурă, вăрлăхĕ хура. 










## Театра каятпăр

— Борис, эсĕ шăмат кун мĕн тăватăн?

— Эпир Люба аппапа балет курма каятпăр.

— Мĕнле балет пăхасшăн?

— Аппа «Сарпике» балета кăмăллать. Вăл билечĕсене те илнĕ ĕнтĕ.

— Эпир аннепе пуканесен театрне каятпăр.








**Кирлĕ сас паллисем хушса çыр.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| п | . улă | у . а | . улка |
| б | . алан | ку . а | . алет |

ка га ке ге ко го






| | |
|---|---|
| ла\|герь | клум\|ба |
| горн | Гла\|ша |
| ге\|рой | Гри\|ша |
| ге\|ор\|гин | Га\|га\|рин |




# Гг

*Гг*

## Пĕрремĕш космонавт

Шупашкарта Гагарин урамĕ пур. Урам варринче — Гагарин палăкĕ.

Кам-ха вăл Гагарин? Мĕнпе чапа тухнă вăл?

Юрий Алексеевич Гагарин — космонавт, вырăс ҫынни. Вăл тĕнче уҫлăхне чи малтан вĕҫсе хăпарнă.



## Пытанмалла выляни

Ачасем картишне тухрĕç. Хураçка та вĕсенчен юлмарĕ.

— Атьăр пытанмалла выляр, — сĕнчĕ Галя.

— Эпир Генăпа пытанăпăр, эсĕ пире шыра, — терĕ Коля.

Гена кĕлет хыçне пытанчĕ. Коля тĕм хыçне лăпчăнчĕ.

Хураçка ăçта пытанчĕ-ши?

## Шут сăвви

Пĕрре — пĕрне,
Иккĕ — икерч,
Виççĕ — виçе,
Тăваттă — тăваткал,
Пиллĕк — пилеш,

Улттă — улма,
Çиччĕ — çилĕм,
Саккăр — салма,
Тăххăр — тăрна,
Вуннă — тух!

та да  то до  ти ди

дос|ка  до|ми|но
Ли|да  Ди|ма
ди|ван  ор|ден
бри|га|да  бри|га|дир









Д д

𝒟 𝒹

## Дельфин

Аннепеле иксĕмĕр
Тинĕс хĕрне килтĕмĕр.
Ах, кунта мĕн чухлĕ ҫын!
Ҫывăхра ишет дельфин.
Хăрамарĕ вăл манран,
Слива илчĕ аллăмран.
Сулкаларĕ хӳрипе,
Утлантарчĕ хăй ҫине.
Пăшăлтатрăм темĕнччен
Дельфинпа эп хăлхинчен...

Р. Сарпи





**Предложенисене уйăрса ҫыр.**

Данил пичче — трактористсен бригадирĕ бригадăн ĕҫ нумай хĕлле тракторсене юсамалла ҫуркунне ака-суха вăхăчĕ.





## Димăпа аслашшĕ

— Шутла-ха, çынна алă мĕн тума кирлĕ? — ыйтрĕ пĕррехинче аслашшĕ.

— Мечĕкле выляма, — шухăшламасăр хуравларĕ Дима.

— Тата мĕн тума-ши? — тĕпчерĕ аслашшĕ.

— Кашăк тытма.

— Тата мĕн тума?

— Юхан шыва вĕтĕ чулсем пеме.

Тĕрĕсех хуравларĕ Дима. Анчах алă ĕçлеме кирлине вăл пĕлеймест-ха.

Е. Пермяк



Тăваттăн пӳрте кĕреççĕ,
пĕри чăлана кĕрсе юлать.

за зе зо зу зы зи



са|сă
ва|за
Зи|на
Си|ма

зо|о|парк
слон
зве|но
зна|чок



# Зз
*Зз*

Çулла ачасем шкул пахчинче ĕçлерĕç. Ачасемпе пĕрле Роза Петровна та пулчĕ.

Пахчара роза тĕмĕсем те пур. Вĕсем çав тери хитре çеçке çураççĕ.





Роза
роза









3

## Арӑсланпа йытӑ ҫури

(Чӑн пулни)

Зоопаркра тискер кайӑксене кӑтартнӑ. Пӗр ҫын йытӑ ҫури илсе пынӑ. Йытӑ ҫурине арӑслан читлӗхне янӑ.

Арӑслан йытӑ ҫурине тивмен. Вӗсем пӗрле апат ҫинӗ, пӗрле ҫывӑрнӑ.

Йытӑ ҫури зоопаркра пӗр ҫул пурӑннӑ. Ҫулталӑк иртсен вӑл чирлесе вилнӗ.

Арӑслан апат ҫиме пӑрахнӑ. Вӑл йытӑ ҫурине ыталанӑ та пилӗк кун хускалмасӑр выртнӑ.

Улттӑмӗш кунне арӑслан вилнӗ.

Л. Толстой

ва фа     ву фу     ве фе






| | |
|---|---|
| шав | ву\|тă |
| шарф | фут\|бол |
| Ве\|ня | торф |
| Фе\|ня | гра\|фин |



Фф

*Фф*

## Фермăра

Феня аппа фермăра ĕçлет.

Фермăра яланах тирпейлĕ. Урайне пăчкă кĕрпи сарнă, стенисем шап-шурă.

Сыснасем патне апат пĕчĕк вакунсемпе илсе пыраççĕ.

Феня аппа сыснисем шултра, ăратлă. Ăна лайăх ĕçленĕшĕн мухтаççĕ.








## Светофор

Пĕррехинче эпир хулара пултăмăр. Урам урлă kaçма тăрсан анне тăпах чарăнчĕ.

— Мĕншĕн? — тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Курмастăн-им эсĕ? Светофор енне пăх, — терĕ анне.

Чăнах та, светофорăн хĕрлĕ куçĕ çунать иккен.

— Нумай кĕтмелле-и? — тĕпчетĕп эпĕ.

— Кăштах тăхтар. Машинăсем иртĕç, вара эпир те хускалăпăр.

Светофор çинчен куçа илместпĕр. Акă унăн сарă куçĕ, унтан симĕсси çуталчĕ. Вара эпир те урам урлă kaçрăмăр.

Б. Житков

шу жу   ши жи   ше же



Же|ня   жи|лет
ĕ|шен|нĕ   ши|нель
Жуч|ка   жи|раф
ă|шă   ши|фер



жира́ф




Жирафа ăçта шырас?
Журналта иккен жираф.
Жилетки чăпар-ула.
Женя, кил, пĕрле пăхар.

Жж
Жж

## Хисеплĕ çынсем

Атнер пичче — платник те, слесарь те. Женя аппа — ăста çĕвĕç.

Кăçал вĕсем çĕнĕ çурт лартрĕç. Çурчĕ кирпĕчрен, пӳлĕмĕ нумай. Çуртра хитре сĕтел-пукан. Пӳрт газпа ăшăнать. Шыв урамран пăрăх тăрăх кĕрет.

Атнер пиччепе Женя аппан çурчĕ мĕнлерех? Ӳкер.



! Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр.



ц

ци́ркуль

ча ца    чи ци    че це

| | |
|---|---|
| цех | стан\|ци |
| цирк | стра\|ни\|ца |
| а\|ка\|ци | кон\|церт |

# Цц
*Цц*



## Циркра

Канмалли кун ашшĕпе Федя цирка кайрĕç. Халиччен вăл циркра пулман. Тĕлĕнмелли нумай кунта. Арăслансем унка витĕр сикеççĕ. Клоун тĕрлĕ мыскара туса култарать. Упа та ташлать циркра.



**Предложенисем йĕркелесе çыр.**

Циркра, ташлать, упа, та.

Ункă, арăслансем, сикеççĕ, витĕр.

ща щу щĕ щё щи



плащ мун|ча шă|чă
еш|чĕк пах|ча шу|кăль
чăл|ха раш|ча щёт|ка




# Щщ
*Щ щ*

Пурăнать пулсассăн
туслă
Супăньпе,
шăл щёткипе, —
Ку ача вăл
питĕ ăслă,
Питĕ кăмăллă,
чипер.

В. Маяковский



! Хăвна таса тыт —
сывлăхлă пулăн.

хаваслă
пысăк ______ плащ ______ концерт
çĕнĕ
пĕчĕк ______ щётка ______ цирк







мăрье́

ня нья   ре рье   се съе

кĕсье  
мăрье  
Марье  
Тарье

съезд  
разъезд  
Мăньял  
Патăрьел

# Ъ Ь

*ъ ь*



## Çил ачи

Пĕр кас кӳлĕм çил ачи  
Чупма тухрĕ катаччи.  
Шак! шаккарĕ мăрьене,  
Çӳçентерчĕ Марьене.  
Тухрĕ те вăл çул çине  
Вирхĕнчĕ вăрман енне.  
Шăхăрать хăй  
ши! те ши!  
Ун пек вичкĕнни пур-ши?

В. Харитонов

**Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене çыхăнтар.**



| | | | |
|---|---|---|---|
| вирхĕн | пупле | çивĕч | вичкĕн |
| калаç | вĕçтер | савăн | хаваслан |

# ВУЛАТПĂР, ÇЫРАТПĂР



Кĕнеке эп. Эс мана
Чыслă, сумлă тыткала.
Çамрăк тусăм, яланах
Çывăх пулăп санпала...

Кĕнеке эп. Эс мана
Хисепле, юрат, ал пар —
Пурнăçра вара сана
Нихăçан та йывăр мар.

Ю. Петров





Шурă юр ирĕлет,
Çеçен хир чĕрĕлет,
Ешĕл курăк ӳсет.
Ку хăçан пулать-ши?

Хĕвел хытă хĕртет,
Ăшă çил вĕркелет,
Сар ыраш çитĕнет.
Ку хăçан пулать-ши?

## Çулталăк

Çулталăкра вун икĕ уйăх. Вĕсен ячĕсем:

кăрлач (январь)
нарăс (февраль)
пуш (март)
ака (апрель)
çу (май)
çĕртме (июнь)
утă (июль)
çурла (август)
авăн (сентябрь)
юпа (октябрь)
чӳк (ноябрь)
раштав (декабрь)

Сивĕ хĕл иртрĕ. Шыв-шурлă çур çитрĕ. Часах ăшă çу кунĕсем пуçланĕç. Çу хыççăн тулăх кĕр килсе çитĕ.




Хир илемĕ каять,
Сĕм вăрман çаралать,
Пĕрмай çумăр çăвать.
Ку хăçан пулать-ши?

Хирсенче юр анчах,
Çырмара пăр анчах,
Сивĕтет аванах.
Ку хăçан пулать-ши?

Çĕнĕ çул кăрлачăн пĕрремĕшĕнчен пуçланать.

Çулталăкăн юлашки кунĕ — раштавăн вăтăр пĕрремĕшĕ.

Çулталăкра вун икĕ уйăх.

Кашни уйăхра вăтăр е вăтăр пĕр кун. Нарăс çеç çирĕм сакăр е çирĕм тăхăр кунлă.

Кашни уйăхăн тăршшĕ тăватă эрне ытларах.



Пĕр йывăçăн 12 турат. Кашни турачĕ çинче 4 йăва. Кашни йăвара 7 çăмарта.



## Çуркунне

Килчĕ ырă çуркунне,
Килчĕ ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене
Хĕл ыйхинчен вăратса.

Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
Ешĕл тумтир тăхăнать,
Çеçен хир те ешерет,
Илемĕпе мухтанать.

К. Иванов



**Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем çыр.**

| | |
|---|---|
| 1) Ăшă, ырă ... . | хĕл |
| 2) Сивĕ, хаяр ... . | кĕркунне |
| 3) Ылтăн, тулăх ... . | çуркунне |



## Талăк

Эпир пурăнакан Çĕр чăмăр. Ун тавралла — тĕнче уçлăхĕ. Çĕр хăйĕн тĕнĕлĕ тата Хĕвел тавра çаврăнать. Вăл хăйĕн тĕнĕлĕ тавра пĕр талăкра çаврăнса çитет. Çак вăхăтра çĕрпе кун ылмашаççĕ. Тĕттĕмленет, каç пулать, тул çутăлать, кун пуçланать.

## Вăхăт

Вăхăта сехетпе виçеççĕ. Сехет çинчи çаврашкана вун икĕ пая пайланă. Кашни пайĕ пĕр сехете пĕлтерет.

Сехетĕн икĕ йĕп. Пĕр йĕппи вăрăм, тепри кĕске. Кĕске йĕппи сехетсене кăтартать. Вăл майĕпен куçать, талăкра икĕ хут çеç çаврăнать. Вăрăм йĕппи кашни сехетре пĕр çаврăм тăвать.



## Тул çутăлать

Çăлтăрсем сӳнеççĕ
Ерипен, илемлĕн.
Уйăх шурса çитрĕ
Çӳллĕ тӳпере.

Халĕ çĕкленес пек
Вашават хĕвелĕ
Тухăçа илемлĕн
Çулăм ӳкерет.

Улăхра, шăрça пек,
Кĕмĕлĕн-мерченĕн
Чăмăртанчĕ сывлăм —
Çакăттăм мăя.

Ереветлĕ шăпчăк
Уншăн хĕпĕртенĕ,
Эх, юрри-çке уççăн
Чӳхенсе каять...

И. Ивник



**Точкăсем вырăнне кирлĕ сас паллисем ларт. Тупсăмне туп.**

Утса-чупса пынă чух
Кĕм . л ç . рĕ тухрĕ . крĕ. (Сывлăм.)



## Каҫ пулать

Хӗвел каҫа сулӑнать,
Сӑрт хыҫнелле пытанать,
Сулхӑнланать сӗм вӑрман,
Уҫӑ сывлӑш палӑрать.

Каҫхи хӗвел ылтӑн пек,
Йывӑҫ витӗр курӑнать,
Сарӑ вӗҫен кайӑк пек
Унӑн ҫути вӑй вылять.

Н. Шупуҫҫынни

**Точкӑсем вырӑнне *у е ӳ* сас палли ҫыр.**



1) . хӗ вӑрманта пурӑнать.
2) Раман . хӑ турӗ.
3) Ял ҫумӗнчи к . лӗ тарӑн.



## Тăван çĕршыв

Хамăр пурăнакан çĕршыва эпир Тăван çĕршыв тетпĕр. Кунта пирĕн асатте-асанне, атте-анне çуралнă. Кунта эпир тăван чĕлхепе калаçатпăр.

Эпир хамăр çĕршыва анне тетпĕр. Вăл пире хăйĕн çăкăрĕпе тăрантарса ӳстерет, хăйĕн шывне ĕçтерет...

Тĕнчере пирĕн çĕршывсăр пуçне урăх çĕршывсем те пур. Анчах этемĕн амăшĕ пĕрре кăна, Тăван çĕршывĕ те унăн пĕрре çеç.

К. Ушинский



**Предложенисене уйăрса çыр.**

Пирĕн Тăван çĕршыв пысăк унта тĕрлĕ халăх пурăнать эпир Тăван çĕршыва юрататпăр.



## Юратнă çĕршывăмăр

Юрататпăр эпир, чăвашсем, хамăрăн республикăна. Унăн улăхĕсене, вăрманĕсене, юхан шывĕсене юрататпăр.

Чăвашсем çĕре анне теççĕ. Вĕсем мĕн авалтанпах çĕр ĕçлесе пурăннă.

Чăваш вăрманĕсем питĕ пуян. Вăрманта улма-çырла, мăйăр, кăмпа иксĕлми. Унта тĕрлĕ тискер кайăк нумай.

Пирĕн халăх авалтанпах хăйĕн кӳршисемпе туслă пурăнать.

Юхма Мишши

**Кирлĕ сăмахсем хушса хăвăн адресна çыр.**



Чăваш Республики, ... районĕ, ... ялĕ, ... урамĕ, ... ... ... .



## Тӑван ялӑм

Пирĕн ял Ҫавалӑн сылтӑм енче вырнаҫнӑ. Илемлĕ вырӑн! Тӳрĕ урамсенче йывӑҫсем йышлӑ: йӑмра, хурӑн, хурама.

Ҫавал ял ҫумĕнче кукӑрӑлать те хĕвел тухӑҫнелле ҫул тытать. Эпир, ачасем, чуна ҫывӑх ҫак вырӑнтан ҫулла та, хĕлле те татӑлмастпӑр. Шӑрӑхра шыва кĕретпĕр.

Пулла ҫӳреме те ӳркенместпĕр. Вӑлтасем йӑтса шыв хĕрне чупатпӑр.

Ҫавал хĕлле те хӑй патне йыхӑрать. Шыв пӑрпа витĕнсен конькипе ярӑнатпӑр. Сӑн-пит ҫырла пек. Пуҫ тӳпинчен пӑс тухать. «Эй, Хĕл Мучи, — тетпĕр вара, — ан тĕкĕн пире, ҫул пар!»

П. Егоров



## Мучи пĕви

Пирĕн ял ҫумĕнче юхан шыв пур. Ҫулла, уяр чухне, вăл типсех ларать.

— Эх, ҫакăнта пĕве пулсанччĕ! — терĕ пĕррехинче Кирук.

— Пĕве терĕн тата... Тĕпĕнче хур ури витĕнмелĕх шыв ҫук! — лĕхлетсе кулчĕ Илюш.

— Асанне каланине астăватăп. Кунта тахҫан шыв арманĕ пулнă тет, — терĕ Маруҫ.

— Темле... — пуҫне пăркаларĕ Илюш.

— Ахаль шавличчен атьăр Кĕпитун мучи патне. Вăл ялта чи ватти. Тĕрĕссине каласа парĕ, — хушша кĕтĕм эпĕ.

Эпир пырса кĕнĕ чухне Кĕпитун мучи кĕлет умĕнче кивĕ вĕлле юсатчĕ. Ăна мĕн ҫăмăлпа

килнине пĕлтертĕмĕр. Вăл пире итлесе ларчĕ-ларчĕ те ассăн сывласа илчĕ.

— Ҫапла, арман пулнă унта. Пысăкчĕ пĕви. Мĕнешкел пулăсем пурччĕ тата!

Эпир шавласа кайрăмăр. Ыранах ял ҫумĕнчи ҫырмара пĕве пĕвелес килчĕ пирĕн.

— Чимĕр-ха, ачасем! — терĕ Кĕпитун мучи.

Вăл пире пĕвере шыв тытăнса тăма ҫăлкуҫсем кирли ҫинчен каласа ăнлантарчĕ.

Кĕҫех ҫуллахи каникул пуҫланчĕ.

Пĕр ирхине Кĕпитун мучипе кĕреҫесемпе наҫилккасем йăтса ҫырмана антăмăр.

Ҫырма кунĕпех кĕр кĕрлерĕ. Пĕрисем тăмлă ҫĕр йăтрĕҫ, теприсем Кĕпитун мучипе пĕрле ҫăлкуҫсене тупса уҫрĕҫ. Тăрăшни сая каймарĕ.

— Илтетĕр-и? Манăн ҫăлкуҫ епле юрласа юхать, — мухтанчĕ Маруҫ.

Кунсерен тулса пычĕ пирĕн пĕве. Ăна Кĕпитун мучие сума суса Мучи пĕви терĕмĕр.

Каярах Мучи пĕвине ял ҫыннисем пысăклатрĕҫ. Халь унта ҫыран таранах шыв тăрать.

Н. Карай

**! Ваттисен сăмахĕ.**

Ĕҫе пуҫăнсан вĕҫне ҫитер.



## Карӑшпа каюра

Пӗчӗк карӑш аякри ӑшӑ енчен тӑван ҫӗршывне, ҫурҫӗре, васкать. Карӑш ҫулла пирӗн тӑрӑхра чӗпӗ кӑларать. Хӗл касма вара инҫетри Африкӑна вӗҫсе каять.

Карӑша вӗҫме йывӑр. Унӑн ҫуначӗсем пӗчӗк. Вӑл тӗллӗн-тӗллӗн вӗҫет, тӗллӗн-тӗллӗн ҫуран утать.

Ҫул ҫинче карӑш каюрана тӗл пулнӑ.

— Кам эсӗ? Ӑҫталла ҫул тытатӑн? — ыйтнӑ карӑшран каюра.

— Эпӗ карӑш, ӑшӑ енчен тӑван ҫӗршыва таврӑнатӑп.

— Мӗншӗн эсӗ яланах ӑшӑ ҫӗршывра пурӑнасшӑн мар? — тӗлӗннӗ каюра. — Мӗншӗн ҫулсерен пиншер ҫухрӑмран вӗҫсе килетӗн? Урусене те юн тухиччен амантса пӗтернӗ.



Хурчка та тытма пултарать сана. Мĕншĕн эсĕ çак тертсене куратăн? Мĕн илĕртет сана сивĕ çĕре?

— Тăван çĕршыв... — хуравланă карăш.

В. Сухомлинский



**Предложенисем туса çыр.**

| | |
|---|---|
| 1) Автан ... . | какалать |
| 2) Хур ... . | авăтать |
| 3) Вăкăр ... . | макăрать |
| 4) Ача ... . | мĕкĕрет |

**Предложенисенчен калав йĕркеле.**

Симĕс курăк çĕкленет.
Хĕвел хĕртсе пăхать.
Юр ирĕлсе пĕтрĕ.
Çуркунне çитрĕ.



### Иван Яковлевич Яковлев

Чăваш çырулăхне йĕркелесе яракан çын Иван Яковлевич Яковлев пулнă. Вăл чăваш ачисем валли букварь çырса кăларнă.

Унтанпа çĕр çирĕм çул ытла иртрĕ ĕнтĕ. Чăваш халăхĕ хăйĕн чаплă ывăлне манмасть.

## ЯКОВЛЕВ БУКВАРĔНЧЕН

### Чакак

Чакак çулла вăрманта пурăнать, юр çусан яла пырать. Çулла вăрманта вăл чĕпĕ кăларать; ялтан çăмарта вăрласа кайса чĕпписене тăрантарать. Хĕлле сивĕ пулсан йывăрлăх çине ларать те: «Чак-чакак, чак-чакак», — тесе чакаклать.




**Кирлĕ сас паллисем ларт.**

1) Асламăшĕ . мах каласа парать.

2) Ван . кпа Мар . к тимлĕ итлеҫҫĕ.

## Ҫуркунне

Ҫуркунне хĕвел хĕртсе пăхать. Тулта ăшă. Ҫил вĕрмест.

Ҫӳлте тăрисем юрлаҫҫĕ. Юр ирĕле-ирĕле кăшт анчах юлчĕ. Урамра шыв чăл-чăл-чăл! юхса выртать.

Эпир ачасемпе хăма татăкĕсенчен пĕчĕк кимĕсем турăмăр. Хытăрах юхакан пĕр шырлана ятăмăр. Хамăр: «Камăн иртет! Камăн иртет!» — тесе кимĕсем хыҫҫăн чупатпăр.



Çапла чупса пынăçемĕн эпĕ хам умра мĕн пуррине те курман. Шыв лупашкине лап! кĕтĕм ӳкрĕм. Кĕпе-йĕм йĕп-йĕпе! Сивĕ, шăнтăм хам.

Кĕпе-йĕм улăштарас тесе эпĕ киле чупса кайрăм.

— Ăçта йĕпетрĕн? Епле йĕпетрĕн? — тĕпчеме пуçларĕ анне.

Эпĕ тӳррипе каласа патăм.

— Çук сана кĕпе! Кай, кăмака çине улăхса лар! Ӳлĕм умна-хыçна чипер пăхса çӳре! — терĕ аннем.

Шывăн турачĕ çук теççĕ.

### Предложенисем йĕркелесе çыр.



1) Çитрĕ, суркунне.
2) Хĕвел, хĕртсе, пăхать.
3) Ăшă, тулта.
4) Çурхи, шыв, хушшинче, урам, юхать.
5) Кимĕсем, эпир, турăмăр.
6) Хаваслă, çуркунне, вăхăт.

### ! Ваттисен сăмахĕсем.

Шывран типпĕн тухма çук.
Шыв теме те çĕмĕрĕ.
Вăйăран вăкăр тухать.





## Чăваш халăх сăвăçи

Константин Васильевич Иванов — чăвашсен чаплă сăвăçи. Унăн «Нарспи» кĕнекине халăх юратса вулать. Ăна вырăсла, тутарла тата ытти чĕлхесене куçарнă.

К.В. Ивановăн пултарулăхĕ нумай енлĕ пулнă. Вăл ялти шкулта вĕреннĕ чухнех ӳкерме юратнă, сăвăсем çырнă.

Каярахпа Константин Иванов Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, ĕçленĕ. Кунта вăл И.Я. Яковлева пулăшнă, чăвашла букварь валли ӳкерчĕксем тунă.



### Кирлĕ сăмахсем хушса çыр.

| | |
|---|---|
| 1) Анюк ... ялĕнче пурăнать. | Шупашкар |
| 2) Аппăшĕ ... хулинче вĕренет. | Кинчер |
| 3) ... варринче утравсем пур. | Атăл |



## Сентти

Чипер ача Сентти пур,
Чупса çӳрет урамра.
Кĕвентине утланса
Ача вылять лашалла.
Аслă урам тăршшĕпе
Чиксĕр тусан кăларать,
Хура чикан пек хура
Каçпа киле таврăнать.
Чипер ача Сентти пур,
Чупса килет лашипе,
Хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
Пакăлтатать инкĕшпе.

К. Иванов



**Сыпăксем хушса сăмахсем ту.**

Сĕ.., хĕ.., ав.., ар.., ал.., ме.., чĕ.. .



## Чĕкеҫ

Чĕкеҫ, чĕкеҫ, чĕкеҫĕ,
Кунĕпе вĕҫсе ҫӳрет вăл,
Пĕртте канма пĕлмест вăл,
Шăна-păван пуҫтарать,
Чĕпписене тăрантарать.

К. Иванов



**Предложенисене уйăрса ҫыр.**

Ҫуркунне ҫитрĕ кайăксем ăшă енчен вĕҫсе килчĕҫ вĕсем васкаса йăва ҫавăраççĕ.



**Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем ларт.**

Хăлат, кĕпшĕл, тăри — ... . Ҫĕмĕрт, йăмра, юман — ... . Ҫеҫпĕл, серте, пултран — ... .

Ҫăраççисем: йывăççем, ӳсен-тăран, кайăксем.





## Виççĕмĕш космонавт

Андриян Григорьевич Николаев — виççĕмĕш лётчик-космонавт. Вăл Совет Союзĕн Геройĕ ятне икĕ хут илнĕ. Хăйĕн ытти космонавт тусĕсем пекех, Андриян — хăюллă çын.

Чăваш ачисемшĕн Андриян Николаев уйрăмах çывăх. Вăл пирĕн ентеш-çке!

Паттăр космонавтăн тăван ялĕ — Шуршăл.

Шуршăл хитре вырăнта вырнаçнă. Ял урамĕсем тирпейлĕ, ешĕл йăмраллă. Ял çумĕпех Çавал шывĕ юхса иртет.

Андриян Григорьевич вĕреннĕ Шуршăлти шкулта халĕ музей. Унта космонавт вĕреннĕ класс, вăл ларнă парта пур. Шуршăлти колхоз та космонавт ячĕпе хисепленет.

Юхма Мишши

## Çĕнтерӳ кунĕ

Çур ĕмĕр ытла каялла пирĕн çĕршывăн нумай хулипе ялĕ çийĕн вăрçă кĕрлесе иртнĕ. Фашистла Германи халăхсене чура тăвасшăн пулнă. Фашистсем тĕнчере «çĕнĕ йĕрке» тума шут тытнă.

Тăвата çул пынă Тăван çĕршывăн аслă вăрçи. Вăл çав тери хăрушă та йывăр пулнă. Нумай хулапа ял ишĕлнĕ, çунса кĕлленнĕ.

Вăрçăра нумай çын аманса сусăрланнă, вилнĕ. Вăрçа пула нумай вата-вĕтĕ, ача-пăча тăлăха юлнă. Халăх çав тери пысăк хурлăх, нуша тӳснĕ.

Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăхсем фашистсене çĕнтернĕ-çĕнтернех.

Тăванла ытти халăхсемпе танах чăвашсем те вăрçăра паттăррăн çапăçнă.

Çак хăрушă вăрçăра çĕнтернĕ ятпа çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче çулленех Çĕнтерӳ кунне паллă тăвассĕ.



### Предложенисене уйăрса çыр.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи тăвата çул пынă вăрçăра чăвашсем те паттăррăн çапăçнă нумайăшĕ киле таврăнайман.



## Чап монуменчĕ

Шупашкарта, Атăлăн çӳллĕ çыранĕнче, çамрăк парк ешерет. Ун варринче капмар палăк — Чап монуменчĕ. Ку палăка Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче çĕнтернĕ ятпа лартнă.

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче кунта çулленех халăх нумай пухăнать. Çынсем Çĕнтерӳ кунне уявлама таçтан-таçтан та килеççĕ.

Палăк умĕнче сӳнми вут — асăну вучĕ çунать. Çынсем палăк патне чечек кăшăлĕсем хураççĕ. Вĕсем вăрçăра вăхăтсăр вилнисене асăнса пуç таяççĕ.

? Сирĕн ялта вăрçăран килмен салтаксене асăнса лартнă палăк пур-и?
Вăрçăра пуç хунă паттăрсене асăнса эсир çав палăк патне чечексем хуратăр-и?

## Пӗртӑван паттӑрсем

Муркаш районӗнчи Исетерккӗ ялӗнчи Татьяна Николаевнӑпа Алексей Илларионович сакӑр ывӑл пӑхса ӳстернӗ. Вӗсем саккӑрӑшӗ те Тӑван ҫӗршывӑн аслӑ вӑрҫине хутшӑннӑ.

Иван вӑрҫӑн пӗрремӗш кунӗнчех пуҫне хунӑ. Шӑллӗ вилнине пӗлсен Григорипе Александр хӑйсен ирӗкӗпе фронта кайнӑ. Хӗрӳ ҫапӑҫура Григорин пурнӑҫӗ те татӑлнӑ. Вилнӗ хыҫҫӑн ӑна Совет Союзӗн Геройӗ ятне панӑ.

Егор пӗр ҫапӑҫура тӑшман дзотне хӑй ӳчӗпе хупланӑ. Павел та Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлесе вилнӗ. Фролпа Родион вӑрҫӑра йывӑр аманнӑ. Вӗсем те вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗнӗ. Александрпа Михаил та вӑрҫӑра паттӑр ҫапӑҫнӑ.

Сакӑр паттӑр ятне ял ҫыннисем яланах асра тытаҫҫӗ. Ялти пӗр урама Алексеевсен ятне панӑ. Урам вӗҫне паттӑрсен амӑшне асӑнса палӑк лартнӑ.



**Ҫырса ил.**

Пире вӑрҫӑ кирлӗ мар,
Миршӗн пурте кар тӑрар!

**! Ваттисен сӑмахӗсем.**

Ырӑ ят паттӑра тарават.
Паттӑрсем хыпарсӑр ҫухалмаҫҫӗ.

## Тав туни

Пысăк Чул çырма тĕпĕнче нумай выртнă. Кам кăна иртсе çӳремен пуль кунтан — Чула асăрхаман.

— Эпĕ никама та кирлĕ мар çав, — пăшăрханнă вăл.

Чул умĕпе икĕ çын иртсе пынă. Пĕри Чула асăрханă та:

— Ку мана питĕ кирлĕ, ытла та лайăх Чулçке, — тенĕ.

Унтан вăл лаша кӳлсе аннă та Чула яла турттарса кайнă. Çĕнĕ пӳрт тунă çĕрте урам енчи кĕтесе хунă.

Чул халĕ сакăр кантăклă пысăк пӳрте йăтса ларать. Хăйне вырăн тупнăшăн питĕ савăнать вăл.

Пӳрт йывăр пулин те чăтать Чул. Хăйне час-часах мухтаса та илет: «Эпĕ пысăк пӳрте йăтса ларатăп. Мана шута хурса хисеплерĕç. Халĕ эпĕ усă кӳме пултаратăп. Телейлĕ Чул эпĕ».

Г. Мальцев

**! Ваттисен сăмахĕсем.**

Ĕçне кура мухтавĕ.

Этем тени ĕçĕпе паха.

## Улмуççи

Мучи улмуççи лартнă.

— Эсĕ ватă. Ку улмуççинчен пĕр улмине те çисе кураймăн, — тенĕ ăна çынсем.

— ...



Мучи мĕнле хуравланă-ши? Эсĕ мĕнле шутлатăн?

## Пĕрлĕх

(Таджик халăх юмахĕ)

Пурăннă тет пĕр çын. Унăн виçĕ ывăл пулнă. Вĕсем туслă та телейлĕ пурăннă.

Пĕррехинче Телей çав çынна калать:

— Эп сан килӳнтен тухса каятăп, — тет.

Вара ашшĕ аслă ывăлне чĕнсе илет те:

— Телей пирĕн килтен тухса каясшăн. Мĕн калăн? — тесе ыйтать.

— Каясах тесен кайтăрах, ун вырăнне пирĕн пĕрлĕх юлать, — тет аслă ывăлĕ.

Унтан ашшĕ вăталăх ывăлне чĕнсе çакăн çинченех ыйтать.

Вăталăх ывăлĕ те:

— Кайсан кайтăрах, ун вырăнне пирĕн туслăх юлать, — тет.

Ашшӗ юлашкинчен кӗҫӗн ывӑлӗнчен ыйтать. Кӗҫӗнни ашшӗне:

— Телей кайсан та пирӗн тӑванлӑх юлать, — тесе хуравлать.

Вара ҫак ҫын Телее ывӑлӗсем мӗн каланине пӗлтерет.

— Эпӗ сирӗн патӑртан нисҫта та каймастӑп. Ӑҫта пӗрлӗх, туслӑх та тӑванлӑх, манӑн вырӑн та ҫавӑнта, — тет Телей. — Эсир шухӑшпа, сӑмахпа кӑна мар, ӗҫре те яланах пӗрле. Эпӗ сирӗн патӑртах юлатӑп.

Телей ҫапла калать те ҫав ҫын килӗнчех юлать.

**! Ваттисен сӑмахӗсем.**

Тӑлӑх йывӑҫа тӑвӑл хуҫать.
Пӗрлӗхре — вӑй.

## Арӑслан, упа тата тилӗ

Арӑсланпа упа аш тупрӗҫ тет те пӗр-пӗринпе тавлашма пуҫларӗҫ тет. Упа арӑсланне парасшӑн мар, арӑсланӗ — упине. Тулашсан-тулашсан вӑйран кайнипе иккӗш те тӑсӑлса выртрӗҫ тет.

Тилӗ вӗсен хушшинче аш выртнине курать те вӑрттӑн ярса илсе шӑва парать.



## Пӳлӗмре

Асатте канмашкӑн выртрӗ
Кӑнтӑрла кравать ҫине,
Кӑшт шӑпрах пулма вӑл ыйтрӗ —
Чартӑм пуканесене.

Калаҫассӗ ҫепӗҫ саслӑн,
Шавламассӗ вӗсем тек,
Кӗтесре кушак ӑнланнӑн
Мӑрлатать пӗр сассӑр пек.

Эп хуллен юмах пуҫларӑм,
Ман тавра пуканесем...
Асаттеҫӗм, кан пӗр ҫаврӑм,
Шӑппӑн калӑп юмахсем.

А. Ильин



**Ҫывӑх пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем туп.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| пӗчӗк | лайӑх | тӗттӗм | инҫе |
| аякра | тӗксӗм | аван | вӗтӗ |

**Хама çеç, тен, хăналас...**

Тупрăм виçĕ çĕр çырли.
Чухлăр:
татрăм кам валли?
Пĕрне парас Кирлене,
Чунтан савнă пиччене.

Теприне — Кулинене,
Кӳршĕ ял хĕр ачине.
Виççĕмĕшне — Марука,
Хамăн пĕчĕк йăмăка.

Чим-ха, кун пек пайласан
Кӳренмест-ши шăллăм ман?
Пăшăрханмĕç-ши атте
Тата вата асатте?

Урăхла, тен, шухăшлас —
Хама кăна хăналас...

П. Çăлкуç





**Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп:**

| | | |
|---|---|---|
| ăшă | шăрăх | пысăк |
| сулхăн | сарлака | хăвăртрах |
| анлă | ерипен | капмар |
| хуллен | сивĕ | часах |

## Пан улми

Хура кĕр. Йывăççем çап-çара. Уçланкă хĕрринчи улмуççин чи çӳлти турачĕ çинче çеç пĕртен-пĕр пан улми упранса çакăнса юлнă.

Уçланка мулкач чупса тухрĕ. Пан улмине курах кайрĕ. Анчах ытла çӳлте çав вăл. Сикĕн — сиксе çитеймĕн. Мĕнле татмалла ăна?

— Крак!

Пăхать мулкач — турат çинче ула курак лара парать.

— Эй, ула тăхлач! Татса пар-ха мана çав пан улмине!

Ула курак пан улмине татса илет те... Анчах пан улми кайăк çăварĕнчен тухса ӳкет.

— Тавах сана, ула курак! — тет те мулкач пан улмине илме тăрать. Анчах кĕтмен çĕртен тĕлĕнтермĕш улма чăшлатса илет те чупса каять.

— Мĕн ку?

Шарт сикет кĕске хӳре. Кăштахран тин тăна кĕрет. Пан улми йывăç айĕнче тĕлĕрсе выртнă чĕрĕп çурăмĕ çине ӳкнĕ иккен! Лешĕ хăранипе тапса сикнĕ.

— Чарăн, тăр! — кăшкăрать мулкач. — Ман пан улмине ăçталла йăтса каятăн?

— Мĕнле санăн пан улми? Ăна ӳкнĕ чухне эпĕ тытнă. Апла пулсан вăл манăн!

— Халех панă пултăр манăн пан улмине! Ăна эпĕ тупнă! — тарăхать мулкач.

Вĕсем патне ула курак вĕçсе анать.

— Ан тавлашăр, — тет вăл. — Ку вăл манăн пан улми. Ăна эпĕ татнă.

Пуçланать вара харкашу!

— Манăн пан улми! Манăн пан улми! — тесе кăшкăрать кашниех.

Пĕтĕм вăрман шавлама пуçлать. Часах çапăçу-харкашу та пуçланать. Ула курак чĕрĕпе сăмсинчен çыртса илет, чĕрĕп мулкача йĕпписемпе тирет. Мулкачĕ вара ула курака урипе тапать...

Шăв-шава илтсе çаксем патне упа пырса тухать.

— Мĕн ку? Мĕнле шăв-шав? — мĕкĕрет упа.

— Эсĕ, упа, вăрманта чи пысăкки, чи ăсли. Татса пар пирĕн тавлашăва. Эсĕ мĕнле каласан — çапла пулать, — йăлăнаççĕ айван чĕр чунсем. Хăйсен тавлашăвĕн сăлтавĕ çинчен упана каласа параççĕ.

Утаман шутлать-шутлать те çапла ыйтать:

— Пан улмине хăшĕ тупнă?

 — Эпĕ, — тет мулкач.

— Кам татнă?

— Эпĕ, — тет ула курак.

— Хăшĕ тытнă?

— Эпĕ, — тет чĕрĕп.

— Эсир пурте пан улмине илме тивĕç, — тет упа-утаман.

— Анчах вăл пĕрре кăна-çке!

— Эсир ăна кашнине пĕр тан пайласа çийĕр, — ăнлантарать упа.

— Чăнах та! Мĕнле-ха хамăрах тавçăрса илеймен çакна? — тĕлĕнеççĕ пурте.

Чĕрĕп пан улмине тăватă пая пайлать те çапла кала-кала валеçме пуçлать: ...

В. Сутеев çырнинчен

? Чĕрĕп кашни чĕр чуна мĕн каланă-ши?

! **Ваттисен сăмахĕсем.**

Нумай та пĕтет, сахал та çитет, туслă пуръăннине мĕн çитет.

Кăмăла кура кăмăл.

**Хăвăрт кала.**

Пирĕн пата паян Павăл пичче пычĕ те пире пурне те пан улми пачĕ.



## Хӑйсемех

Пӗррехинче Мишук амӑшӗ киле таврӑнсан шалт тӗлӗннӗ.

— Мишук, велосипед урапине епле аркатрӑн?

— Анне, вӑл хӑех арканчӗ.

— Кӗпӳ тата мӗншӗн ҫурӑк сан?

— Аннеҫӗм, вӑл хӑех ҫурӑлчӗ.

— Хӑрах пушмаку ӑҫта тата? Ҫухатрӑн-им?

— Вӑл хӑех таҫта ҫухалнӑ.

— Вӗсене кӑштах вӗрентсе илер пуль, — тенӗ амӑшӗ ывӑлне итленӗ хыҫҫӑн.

— Мӗнле?

— Питӗ ансат, — хуравланӑ амӑшӗ. — Акӑ мӗнле. Енчен те вӗсем хӑйсемех ҫӗмӗрӗлме,

çурăлма, çухалма пĕлеççĕ пулсан халĕ хăйсемех тӳрленччĕр, çĕленччĕр, тупăнччăр. Эпир вара санпа, Мишук, пĕр шухăшсăр кĕтсе ларăпăр.

Мишук çĕтĕк кĕпипех çĕмĕрĕлнĕ велосипечĕ çумне ларнă та шухăша кайнă.

Е. Пермяк

? Мишук мĕншĕн шухăша кайнă?
Амăшĕ мĕн каласшăн пулнă?

**Натали кĕпе тĕрлет**



Натали кĕпе тĕрлет.
Кам валли
Çав тери хитрелетет
Натали?
Тап-таса юр евĕрлĕ
Шур пире
Хĕрлĕ, симĕс çиппеле
Вăл тирет.
Сарăпа сенкер хушать
Тĕлĕпе.
Ку хĕвел пек курăнать,
Пĕлĕт пек.

П. Хусанкай

## Кулине

— Ăçтан тупнă Кулине
Килĕшӳллĕ куллине?
— Ирхи хĕвел куллине
Илнĕ пулĕ хăй çине.
— Ăçтан тупнă Кулине
Савăнăçлă кăмăлне?
— Ирхи кайăк сассине
Илнĕ пулĕ хăй чунне.
— Ăçтан тупнă Кулине
Яланхи тирпейлĕхне?
— Ашшĕ-амăш ĕçлĕхне
Илнĕ пулĕ хăй чунне.

Н. Ытарай



**Предложенисен вĕçне суйла.**

| | |
|---|---|
| Хĕвел пăхрĕ те | урок пуçланчĕ |
| Кулине ирхине тăчĕ те | çанталăк ăшăтса ячĕ |
| Шăнкăрав шăнкăртат-рĕ те | çăвăнчĕ, тумланчĕ |

**Тивĕçлĕ сăмахсене çыхăнтар.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| ăшă | ача | чĕвĕлти | Кулине |
| савăнăçлă | кăмăл | тирпейлĕ | хĕвел |
| хаваслă | тутăр | çутă | чĕкеç |



## Килнӗ чухне илӗпӗр

Ленӑпа асламӑшӗ кӳршӗ яла каяҫҫӗ. Асламӑшӗ йӑтнӑ ҫӗклем самаях пысӑк. Темиҫе хутчен те канса илчӗҫ вӗсем. Асламӑшне тем пекех пулӑшӗччӗ Лена, анчах пӗчӗк-ҫке-ха вӑл. Ҫӗклеме йӑтса пӑхрӗ те вырӑнтан та хускатаймарӗ. Пурпӗрех асламӑшне пулӑшмалли мел шыраса тупрӗ хӗр ача.

— Асанне, атя ку япаласене ҫул ҫине лартса хӑваратпӑр. Таврӑннӑ чухне илӗпӗр, — хӗпӗртесе пӗлтерчӗ вӑл.

Ю. Силэм

### Предложенисене уйӑрса ҫыр.



Манӑн пӗчӗк йӑмӑк пур вӑл маттур хӗр ача ватӑ асаннене пулӑшать.

## Сăпка юрри

Упа кĕчĕ шăтăкне,
— Çывăр, — терĕ çурине.
Тилĕ кĕчĕ йăвине,
Çывăратрĕ пепкине.

Эс те, шăллăм (йăмăк), кусна хуп,
Кусна хуп, кусна хуп...

П. Эйзин

## Сехет

Шăк-шак! Шăк-шак!
Ерипен шаккать сехет.
Шăк-шак! Шăк-шак!
Вăл куçа хупма сĕнет:
— Лăпкă çывăр ăшăнса,
Тĕлĕкре те савăнса.
Шăк-шак!

? Санăн пĕчĕк йăмăку е шăллу пур-и?
Вăл мĕн ятлă?
Эсĕ ăна пăхатăн-и?



**Çырса ил. Кирлĕ çĕрте çемçелĕх палли ларт.**

Гал.ăн пĕчĕк шăллĕ пур.
Галя ăна питĕ юратат. .
Вăл унпа вылят. .



## Кумалякпа туслашни

Кумаляк вăл — кăткă. Пирĕн пӳрт çумĕнче пахчара пурăнать. Виçĕм кун урана шăрпăк кĕртсе ятăм та пусма вĕçĕнче çапла шăрпăк кăларса ларатăп. Пăхатăп: картлашка хăми тăрăх Кумаляк чупать. Эпĕ ăна тӳрех пĕлтĕм Кумалякне. Ма Кумаляк-и? Темме. Таçта илтнĕ эпĕ вăл сăмаха, тем тени вăл — пĕлместĕп. Хам пуç ăссĕн çак кăткă пуль терĕм. Чăнах та çавă пулнă. «Кумаляк», — тесе чĕнтĕм те, чарăнса ман çине кăн-н! пăхрĕ. Кайран калаçса кайрăмăр вара. Вăл мана хăй çинчен каласа парать, эпĕ — хам çинчен.

Кумаляксен килĕ питĕ пысăк. Кăткăсем нумайăн пурăнаççĕ. Эпĕ курнă вĕсене: эх, чупаççĕ. Тем пысăкăш япаласене сĕтĕреççĕ.

Кумаляк вăл манашкал ача та, унпа выляма никам та ерçмест, çитĕннисем хăйсемпе ертмеççĕ. Çавăнпа та малтанхи хут курсанах

манран пĕр чĕптĕм те хăрамарĕ вăл. Ура туни тăрăх чупса хăпарчĕ те чĕркуççи çине ларчĕ.

Ним те çыртмасть. Кăткăсем вĕсем хăйсен кил-çуртне аркатма тытăнсан кăна питĕ хытă тарăхса каяççĕ, вара çыртаççĕ.

Тарăхмасăр. Эпĕ хам та ĕнер лаç çумĕнче пӳрт турăм. Кукăль пĕçерме тесе тăм илме кайрăм çеç, Максăм Вани ман пӳрте йăлт тустарса тăкнă. Кайран пахча алăкĕ айĕнчен пăхса кулать манран. Хăйĕн хырăмĕ çара тусан. Пиччĕшĕ пур та, çӳрет иртĕхсе.

Манăн кăна Кумаляксăр пусне урăх никам та çук. Анне хулана кайнă. Паян, ыран, тепĕр кун пулсан тин килет. Кĕтетĕп, кĕтетĕп. Атте каçалапа килет-ха, анчах ывăнса таврăнать те — манпа вылямасть. Пĕтĕм ĕмĕр çак Кумалякпа вылясах иртсе каять ĕнтĕ.

Хĕвел ансан Кумаляк çывăрмаваскать. Тĕттĕмленсен вĕсем пӳрт алăкне чăнкăр-чăнкăр питĕрсе лартаççĕ тет те кĕртмеççĕ тет.

Петĕр Яккусен



**Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп.**

| | |
|---|---|
| пĕчĕк | васкать |
| шултра | вĕтĕ |
| хыпаланать | пысăк |

## Ырпи

Кĕшĕл-кĕшĕл хур чĕппи.
Эх, епле хитре чуппи!
Хăшсем курăк сăхаççĕ,
Хăшсем шыва чăмаççĕ.
Вĕтĕр-вĕтĕр вĕтĕрпи,
Хур чĕппи шутлать Ырпи:
— Пĕрре, иккĕ, виççĕ,
вуннă,
Тăххăр, саккăр, пиллĕк,
çиччĕ!
Ăна пиччĕш тӳрлетет:
— Тĕрĕс мар шутлатăн, —
тет, —
Пĕрре, иккĕ, виççĕ,
тăваттă,
Пиллĕк, улттă, çиччĕ,
саккăр!
Пурĕ сакăр хур чĕппи —
Шутлама вĕрен, Ырпи.

А. Ыхра



Ваттисен сăмахĕсене вĕçле.



Хур усракан хуранĕ ... .
Хур хыççăн кайнă чăх пуççăр ... .

## Килсĕрскерсем

...Пĕррехинче автобусран икĕ йытă çавăтнă çын анса юлнă. Вăл йыттисене юпа çумне лартса хăварнă та хăй тепĕр автобуспа ларса кайнă.

Йыттисем питĕ хитрескерсем пулнă. Иккĕшĕн те сăмсисем шĕвĕр, хăлхисем чăнк.

Автобуссем пĕрин хыççăн тепри ирте-ирте кайнă. Йытăсем хуçи таврăнасса кĕтнĕ. Хуçи вара таврăнман та таврăнман.

Йытăсене çынсем хăваланă. Анчах вĕсем çав вырăнтан ниçта та кайман.

Çав вырăна тепĕр килсĕр йытă пырса тухнă. Вăл, йăм хураскер, мĕскĕн йытăсем умĕпе унталла-кунталла мăнаçлăн утса иртнĕ. Йĕрĕнчĕклĕн асфальта кайри урипе чăрмаласа илнĕ те юнашар ларакан юпана йĕпетнĕ.

Чĕтрекен йытăсем пĕр-пĕрин çумне тĕршĕннĕ.

— Эй, эсир мĕн тăватăр кунта? — хаярrăн ыйтнă хура йытă.

— Кĕтетпĕр, — аран-аран сăмах хушнă лешсем.

— Кама кĕтетĕр?

— Хуçана.

— Ăçта вара вăл?
— Вăл часах таврăнать.
— Айвансем, — тенĕ хура йытă...

К. Сергиенко çырнинчен

? Малалла мĕн пулнă-ши? Калав вĕçне шутласа туп.
Йытăсене ӳкер. Сан шутупа, вĕсем мĕнлерехскерсем? Сăнла.

## Улине тĕлĕнет

Пĕррехинче пиллĕкри Улине ашшĕпе пĕрле вырăс ялне кайнă. Урамра пĕчĕк ачасем выляна, хĕрсе кайса тем çинчен калаçнă.

Улине шалт тĕлĕннĕ.

— Атте, пăх-ха, хăйсем пĕчĕк çеç, вырăсла лайăх пĕлеççĕ. Манăн та вĕренесчĕ.

Инçех те мар ĕне ферми пулнă.

Улине ĕнесем макăрнине илтнĕ те:

— Ĕнисем чăвашла макăраççĕ тата, — тенĕ.

М. Сакмаров

? Кӳршĕ ял ачисем мĕншĕн вырăсла аван калаçаççĕ?
Ĕнисем мĕнле макăраççĕ?

## Сывлăм шывĕ

Улăхра пин тĕрлĕ çăлтăр
Мерчен евĕр йăлкăшать.
Чĕлтĕр-чĕлтĕр, йăлтăр-йăлтăр
Сывлăм шывĕ ялтăрать.

Сывлăм шывĕ питĕ капăр,
Йывăçсем те тап-таса.
Чечеке те, курăка та
Вăл ирех каять çуса.

В. Эктел

## Уçланкăра

Епле аван çулла вăрманта! Сывлăш уçă.

Акă уçланкă. Кунта темĕн тĕрлĕ чечек те ӳсет. Уçланкăн пĕр вĕçĕнче йăрăс пӳллĕ хырсем кармашаççĕ. Тепĕр вĕçĕнче шурă хурăнсем ӳсеççĕ. Юнашарах — шапăлти ăвăссем.

Вăрманта куккук аватни, кайăксем шĕнкĕлтетни илтĕнет.

Ç. Элкер



**Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем ларт.**

Хутăш вăрманта ... хурăнсем, ... хырсем, ... ăвăссем ӳсеççĕ. Кунтах ... юман та пур. Йывăçсем айĕнче ... курăк ӳсет.

## Ăшă çумăр

Тĕксĕм пĕлĕт хăпарать
Ешĕл йăлăмран...
Шăпăр-шăпăр шăварать
Çĕр питне, куран.

Шăркаланнă ыраша
Сарă тĕс кĕрет.
Инçетре вылять ăрша,
Йăл та йăл çиçет.

Çĕн вăй-халлăн ешерет
Ытарми тĕнче.
Ăшă çумăр... хĕпĕртет
Пурте çĕр çинче.

В. Ямаш



**Тупсăмне туп.**

Мана çынсем кĕтеççĕ,
Эп килнине курсанах
Пурте тарса пĕтеççĕ.

**Тивĕçлĕ сăмахсене çыхăнтар. Çырса ил.**



| | | | |
|---|---|---|---|
| ăшă | йăлăм | тĕксĕм | тĕнче |
| сарă | çумăр | ытарми | пĕлĕт |
| ешĕл | ыраш | аслă | çанталăк |

## Мăр-мăр кушак мĕнрен тĕлĕннĕ

Пĕр асаннен ватăран та ватă Мурчик ятлă кушак аçи пур. Вăл яланах пӳрт çумĕнче хĕртĕнсе выртать. Куçне хĕссе, пуçне урисем çине хурса çывăрать. Кансĕрлекен шăнасене кăна хӳрипе хăвалать.

Кил картинче пĕр чăх чĕппи çӳрет. Вăл амăшне çухатнă та халь шимплетсе ăна чĕнет. Кушак аçине курсан чăх чĕппи тăп чарăнчĕ. Вăл шăппăн Мурчик патне çывхарчĕ, унтан куçне хупса ун çумне сĕртĕнчĕ. Кушак çумĕнче ăшă та лайăх.

Мурчик хăй çумне такам выртнине туйрĕ. Куçне уçсан вăл чăх чĕппине курах кайрĕ. «Ытла та хăюллă ку чăх чĕппи», — тĕлĕнчĕ кушак. Мурчик ун çине пăхса илчĕ, ăна хĕрхенчĕ: ытла та имшер-ха вăл, ăшăнтăрах.

В. Сухомлинский

**Ыйтусем тăрăх каласа пар.**

Сирĕн кушак пур-и?
Вăл мĕн ятлă?
Сирĕн кушак мĕнлескер?
Вăл мĕн юрататъ?

? Шутла. Эсӗ калава мӗнле анлӑлатнӑ пулӑттӑн?
Калава мӗнле ят пама пулать?

Митя йытӑ ҫури тупнӑ. Вӑл ӑна киле илсе кайнӑ. Улай ят панӑ.
Улай халӗ пысӑк йытӑ. Вӑл кил сыхлать.

## Пурӑш

Пирӗн вӑрмансенче пурӑш текен тискер кайӑксем те курӑнкалаҫҫӗ.

Пурӑш вӑтам йытӑ пек, анчах та лутра туналлӑ, сарлака ҫурӑмлӑ, тӑлпас. Ӑна ҫапӑҫура сайра йытӑ кӑна ҫӗнтерме пултарать. Хӑй питӗ вӑйлӑ пулсан та пурӑш чӑркӑш чӗр чун мар.

Пурӑш ҫапӑҫма юратмасть, часрах шӑтӑка тарса кӗме тӑрӑшать. Хӑй ҫине кӗтмен ҫӗртен тапӑнсан е амантсан ҫеҫ вӑл пӗр кӗтӳ йытӑпа та кӗрешет. Пурӑш шӑлӗ тивсенех йытӑсем аяккалла сиксе ӳкеҫҫӗ. Ирӗке юлнӑ кайӑк вара лӑпчӑнса, чӑшлатса шӑтӑкӗ патне ҫитет те унта чӑмать.

Пурӑш — пыран кайӑк. Вӑл хурт-кӑпшанка та, ӑмансене те, шӑшисемпе шапасене те, ӳсен-тӑран тымарне те пӗр пекех кӑмӑллать.

Пурӑш — ҫӗрлехи кайӑк. Вӑл йӑвинчен кӑнтӑрла пит тухса ҫӳремест. Пурнӑҫне ытларах ҫӗр шӑтӑкӗнче ирттерет.

Хв. Уяр

**Текстпа усӑ курса ыйтусене хуравла.**

Пурӑш ӑҫта пурӑнать?
Вӑл мӗнле чӗр чун?
Унӑн кӑмӑлӗ еплерех?
Пурӑш мӗнпе тӑранса пурӑнать?

## Улашка

Ҫурла уйӑх — мӑйраки,
Шурӑ йӑрӑм — ик айкки.
Шурӑ ҫӑлтӑр —
ҫамкинче,
Шурӑ атӑ — уринче.

Ку вӑл — пирӗн Улашка.
Урӑх пур-ши унашкал
Ырӑ та маттур ӗне?
Вӑл парать ҫӑвне, сӗтне,
Тиркемест вӑл апатне —
Ухлӗмне, йыт пыршине.

А. Ахметкужин

## Упа

Эпĕ упа-утаман,
Ик урапа утакан,
Пур кайăкран хытăрах
Мĕкĕрттерсе улакан.

Çăва тухсан вăрманта
Вĕллесене ватакан,
Тутлă пылне çиекен,
Ĕнесене тытакан.

Н. Шелепи

? Упа çинчен эсĕ тата мĕнле сăвă пĕлетĕн? Ытти чĕр чунсем çинчен сăвăсем пĕлетĕн-и?

**Предложенисене урăхлатса çыр.**



Тĕслĕх. Упа пыл юратать. — Упасем пыл юратаççĕ.

Мулкач йăва çавăрмасть. Вăл ирĕке юратать. Çавăнпа унăн çăмĕ яланах таса.

## Арçури

Пĕррехинче вăрмана хурăн çырли татма кайрăмăр. Çул çинче Павлик хăйне аслашшĕ çамрăк чух вăрманта арçурипе çапăçни



çинчен каласа панине аса илчĕ. Хăлхасене чăнк тăратсах итлерĕмĕр ăна.

Вăрмана кĕрсен Сантăр пирĕнтен уйрăлчĕ.

— Эпĕ хам пĕлнĕ вырăна каятăп, — терĕ.

Эпир сĕвек тăвайккинче юлтăмăр. Лапка-лапка хурăн çырли! Татрăмăр та, çирĕмĕр те.

Маруç тата пит çăмартине çырла шывĕпе хĕретрĕ те кулкаласа:

— Эп çырлара пулнине пĕлччĕр, — терĕ.

Çил тухрĕ. Вăрман çийĕн пĕлĕтсем курăнчĕç. Эпир киле кайма пуçтарăнтăмăр.

— Тс-с-с... — пире шăп пулма асăрхаттарчĕ Павăл.

Çырма леш енче ача макăрнă сас илтĕнчĕ. Пирĕн паталла çывхарса пычĕ вăл. Ак тамаша! Мĕн ку? Сантăр! Шĕшкĕ тĕммисем

хушшинчен вирхĕнсе тухрĕ ача. Хăйне тăруках курсан хăраса каймалла, пичĕ юнпа вараланнă, кĕпин хăрах çанниййĕ çурăлнă. Хуп пуракне те ӳкерсе лапчăтнă тата.

— Мĕн пулчĕ? — ыйтрăмăр эпир.

— Арçури! — аран сывлăш çавăрса каларĕ Сантăр.

— Ăçта?

— Çавăнта! — усланкă енне аллипе сулчĕ вăл.

Пирĕн пурин те арçурине çывăхран курас килчĕ. Сантăр хыççăн вар вĕçĕ урлă каçрăмăр, усланкă хĕррине тухрăмăр.

— Ăçта сан арçури? — ыйтрĕ Маруç.

— Çакăнтаччĕ. Ак çак йывăçа тĕртсе ӳкерчĕ, — мăкăртатрĕ пирĕн тус мăкпа витĕннĕ çĕрĕк çăкана кăтартса.

Çил тулашрĕ. Йывăç тăррисем хумханчĕç. Çывăхра пысăк хăрăк турат шатăрт! хуçăлса ӳкрĕ. Тинех вăрманта çил аташса çӳренине тавçăрса илчĕ Сантăр.

Н. Карай

? Ачасем ăçта кайнă?
Çанталăк мĕнле улшăннă?
Сантăра мĕн хăратнă?

## Асамлă тӳпем

Йăрă калтасем ватă юман тымарĕсем хушшинче унталла-кунталла чупнă, пикенсех тем çинчен калаçнă. Вĕсем пĕр-пĕрне питĕ аван ăнланнă — ара, калтасен чĕлхипе пупленĕ.

— Итле-ха, итле, мĕнлерех кĕрлет Асамлă тӳпем ăшĕнче, — тенĕ пĕри. — Çак шăвшава пула икĕ çĕр куç хупаймастăп. Шăл ыратсан та кун пек нушаланман пуль.

— Темскер пулса иртет унта, теме пит хатĕрленеççĕ, — тенĕ тепри. — Çĕрле тӳпеме тăвата çулăм юпа çине çĕклеççĕ те, вăл вара автансем пĕрремĕш хут авăтиччченех çавăн пек тăрать. Уçăлтараççĕ-ши ĕнтĕ... Вăрман пикисем çĕнĕ ташă вĕренеççĕ-ши...

— Çапла, çапла, — сăмах хушнă виççĕмĕшĕ. — Эпĕ ĕнер пĕлĕш ăманпа калаçрăм. Вăл шăпах Асамлă тӳпем айĕнчен тухнăччĕ. Ăман кунĕн-çĕрĕн çĕр айĕнче çӳрет. Курасса ним те курмасть. Анчах вăрттăн итлеме тесен... Ăна çитекенĕ çук. Тӳпемре пĕтĕм кĕмĕл савăт-сапана тасатса çутатнă, уйăх çутинче типĕтнĕ иккен.

Мĕне пит хатĕрленеççĕ-ши?

Х. К. Андерсен çырнинчен

? Асамлă тӳпемре камсем пурăнаççĕ-ши? Сан шутупа, вĕсем мĕне пит хатĕрленеççĕ?

Шутласа пăх. Мĕнле хăнасем пуçтарăнаççĕ-ши Асамлă тӳпеме? Каласа пар. Хăнасене ӳкерсе кăтартма тăрăш.

## Ай, пакша!

Вăрманта кăмпа пухса çӳретĕп. Çур кун çӳресе те çур карçинкка çеç пухăнчĕ. Мĕн тăвăн, ун пекки те пулать.

Ватă юман тункати çине лартăм. Карçинкка юнашар. Кăмпа сахаллишĕн кăмăлсăртан тек-текех карçинккана пăхса илетĕп.

Сасартăк шартах сиксе илтĕм. Хулпуççи çине темĕн ӳкрĕ. Çемçешке япала мăй çумне сĕртĕнчĕ.

Пуçа майĕпен пăрса пăхрăм. Пакша!.. Манăн ĕнсе çумне пакша йăпшăннă!..

Пĕр самант çухалса кайрăм. Мĕн тăвас? Алă çĕклес — аяккалла тапса сикĕ. Пуçа пăрма та шикленетĕп. Вăт пулать тĕлĕнтермĕш! Кун пеккине курманччĕ.

Унччен те пулмарĕ, çывăхри юман айккипе тăсмакрах чĕр чун чупса иртрĕ. Пакша

çакна асăрхасан ман ĕнсе çумне лăпчăнсах ларчĕ.

— Сăсар, — терĕм эпĕ сасăпах, — авă камран хăраса сехрӳ хăпнă иккен!..

Пакша пăш-пăш сывланинчен вăл çав тери шикленнине çиййĕнчех тавçăрса илтĕм. Сасартăк хăраса ӳкнипе вăл ман çумра хӳтлĕх тупнă иккен.

— Ай, пакша! Эсĕ тепĕр чухне çынран та шикленместĕн-мĕн!

Эпĕ хулпуççи çинчи пакшана алла илесшĕн пултăм.

Пакша туртăшса илчĕ, çĕре сиксе анчĕ. Иккĕ-виççĕ сиксе илчĕ те юман çине улăхса кайрĕ. Унтан хыр йывăççи çине... Кĕçех куçран çухалчĕ.

— Ай, пакша!

Г. Луч



**Чĕр чунсене сăнлакан тивĕçлĕ сăмахсене çыхăнтар.**

| | |
|---|---|
| Упа | пĕчĕк, йăрă, йĕплĕ |
| Чĕрĕп | вăйлă, çăмламас, чапрас ура |
| Мулкач | çивĕч, хĕрлĕ, кăпăшка |
| Пакша | шурă, хăлхамас, хăравçă |
| Тилĕ | хĕрлĕ, чее, йăрă |

## ХАЛӐХ СӐМАХЛӐХӖНЧЕН

### Шӑши ӑҫта?

— Шӑши ӑҫта?
— Шӑтӑкра.
— Шӑтӑкӗ ӑҫта?
— Шыв тулнӑ.
— Шывӗ ӑҫта?
— Вӑкӑр ӗҫсе янӑ.
— Вӑкӑрӗ ӑҫта?
— Кӗтӳре.
— Кӗтӗвӗ ӑҫта?
— Улӑхра.
— Улӑхӗ ӑҫта?
— Йӑлӑмра.




### Мулкач

Лапка-лапка юр ҫӑвать,
Мулкач сикет, йӗр тӑвать.

### Точкӑсем вырӑнне кирлӗ сыпӑксем лартса ҫырса ил.



Кӗтӳ улӑх.. ҫӳрет. Кӗтӳ.. ӗнесемпе пӑрусем, сурӑхсемпе качакасем пур. Кӗтӗве кӗтӳ.. пӑхать.

## Пӳрне юмахӗ

— Атьӑр кӑвас хурар! — тет пуҫ пӳрне.
— Ҫӑнӑх ҫук, — тет шӗвӗр пӳрне.
— Кивҫен илер! — тет вӑта пӳрне.
— Илсен парасси! — тет ятсӑр пӳрне.
— Ҫиес те тарас! — тет кача пӳрне.



**Предложенисем йӗркеле.**

| | | |
|---|---|---|
| Нина | карап | савалать |
| Шура | кӗнеке | ӳкерет |
| Рома | хӑма | вулать |

## Куракпа чӗпписем

Курак калать тет:
— Ах, чӗппӗмсем хура пулсан та хамӑнах.

## Ҫерҫи

Ҫерҫи шыва кӗрсе тухсан тӑмаланнӑ та хӑй мӗлки ҫине пӑхса:

— Ах анчах, ҫут тӗнчере манран пысӑк кайӑк пур-ши? — тесе тӗлӗнет тет.

## Вӑрӑм туна

Вӑрӑм туна шӑрӑх ҫанталӑкра мухтанать:
— Вӑрмантан уя тухса вӗҫӗттӗм те — пӗр пӑт ҫӑвӑм шӑранасран хӑратӑп, — тет.

## Кам мĕне хапсăннă

Пĕр çыннăн виçĕ ывăл пулнă. Ашшĕ вилес умĕн ачисене хăй патне чĕнтерет те çапла ыйтать:

— Кама мĕн кирлĕ: ăс кирлĕ-и е укçа кирлĕ-и?

Аслисем иккĕшĕ ашшĕнчен нумайрах укçа пама ыйтаççĕ. Чи кĕçĕнни ăс ыйтса илет.

Ашшĕ вилсен çаксем уйрăмшар пурăнма пуçлаççĕ. Укçа илсе юлнисем ăспа пурăнма пĕлмесĕр мĕнпур укçине салатса пĕтереççĕ те çука юлаççĕ.

Ăс ыйтса илнĕ ывăлĕ ăспа пурăнса халĕ те пулин аван пурăнать тет.

**Точкăсем вырăнне кирлĕ сас паллисем лартса çыр.**



Аслă ывăлĕсем укçана, мула хапсăннă. Кĕçĕнни мула хапсăн.. . Аслисем ашшĕнчен укçа пама ыйтнă. Кĕçĕн ывăлĕ укçа ыйт.. , ăс пама ыйтнă.

! **Ваттисен сăмахĕ.**

Вĕреннине (ăса) йăтса çӳреме кутамкка кирлĕ мар.



## Çĕвĕç

Пурăннă тет авал пĕр ялта Йăван мучипе карчăкĕ. Вĕсен виçĕ хĕр ӳснĕ тет. Виççĕшĕ те сăнĕпе питĕ чипер пулнă, анчах пĕри те ĕçлеме юратман.

Пĕррехинче çаксем аслă хĕрĕ валли кĕрĕк çĕлетме çĕвĕçе кĕртнĕ. Тепĕр кунне ирпе аслă хĕрĕ урай шăлчĕ тет те çӳппине кĕтесе пухса хучĕ тет. Кăнтăрла вăталăх хĕрĕ урай шăлчĕ тет. Çӳппине амăшĕ тухса тăкасса шанса вăл та кĕтесех тултарчĕ тет. Каçхине кĕçĕн хĕрĕ те çӳппе каллех çавăнтах купаларĕ тет.

Çакна кĕрĕк çĕлекен çĕвĕç сăнаса ларчĕ тет. Каçхине аслă хĕрĕ апат пĕçернĕ чух тăвар яма тăчĕ тет. Хайхи çĕвĕç унран пĕр ывăç

тăвар ыйтса илчĕ тет те кĕтесри çӳп купи çине сапма тапратрĕ тет.

— Мĕншĕн çӳп çине тăвар сапатăн? — ыйтрĕ тет хĕр çĕвĕçрен хытă тĕлĕнсе.

— Тăварламасан çĕрет вăл! — хуравларĕ тет çĕвĕç кулса.

Виçĕ хĕр вăтаннипе хăмач пекех хĕрелсе кайрĕç тет. Сиксе тăчĕç те кĕтесри çӳппе çĕр хутах тасатрĕç тет. Çавăнтан кайран виç кунта пĕрре урай çума тытăнчĕç тет.

? Кил хуçисен хĕрĕсем урай шăлсан çӳппе ăçта купалана?
Çĕвĕç çӳп купи çине мĕншĕн тăвар сапнă?
Йăван мучипе карчăкĕн хĕрĕсем çинчен мĕн калама пулать?
Çĕвĕç, сан шутпа, мĕнлерех çын? Мĕншĕн çапла шутлатăн?

**Тупсăмне туп.**



Хурăн тăрри хумханать, хура халăх пуçтарăнать.

(Урай шăлни.)

**Ваттисен сăмахĕсене вĕçле.**



Ĕç апат ыйтмасть, вăл хăй ... .
Ĕçчен çынран ĕç ... .

## «Ăслă» ывăл

(Пăлхар халăх юмахĕ)

Пĕррехинче ашшĕ хăйĕн ывăлĕсене çапла каланă:

— Ыран аннĕр кукăль пĕçересшĕн. Кам çийĕ? — тенĕ.

— Эпĕ! — кăшкăрса янă пĕр ывăлĕ.

— Кĕçех сысна пусатпăр. Ăна кам çийĕ?

— Эпĕ! — кăшкăрса янă çав ывăлех.

— Хур пусăпăр. Ăна кам çийĕ?

— Эпĕ, эпĕ! — кăшкăрнă çавскерех.

— Ыран хире сухана тухăпăр. Кам суха тăвĕ?

— Ялан эпĕ те эпĕ. Ан тив, ыттисем те мĕн те пулин туччăр, — тенĕ юлашкинчен вăлах.

? Эсĕ ĕçрен пăрăнма тăрăшаканран тăрăхласа кулакан тата мĕнле юмахсем пĕлетĕн? Каласа пар.

! **Ваттисен сăмахĕсем.**

Ырă ут пуласси тихаран паллă, ырă çын пуласси ачаран паллă.
Айван çыннăн чĕлхи вăрăм.
Тарличчен ĕçле, тăраниччен çи.



## Кушак аҫипе ҫерҫи

Пĕррехинче кушак аҫи хĕвел питтинче ăшăнса выртнă. Хайхискер ăшă та тутă пурнăҫпа киленсе куҫне хупса мăрлатнă. Сасартăк вăл юнашарах такам сассине илтет: «Чĕвик! Чĕвик!»

Куҫне уҫать те курать: валашка хĕрринче ҫерҫи ларать иккен. Темĕн сăхать вăл.

Кушак аҫи шартах сикнĕ. Вăл шăртне вирелле тăратнă.

Ҫерҫи валашка тăрăх сиккелесе ҫывăхах пырать. Кушак аҫи чалт! ҫеҫ сикет те ҫерҫие ярса тытать.

Анчах ҫерҫийĕ ватăскер пулнă. Ватă ҫерҫие хывăхпа улталаймăн!

— Чим! Чим! — тет вăл. — Эсĕ мана ҫиессе ҫийĕн те, анчах аса ил-ха. Паян, ҫывăрса тăрсан, пит ҫурăн-и? Эсĕ куҫна та тасатман-



çке. Ăслă çынсем çывăрса тăрсан пит çăваççĕ, вара тин ĕçе пикенеççĕ.

— Чăнах та, пит çăваймарăм! — аса илнĕ хайхи кушак аçи.

Вăл чĕрнисене пытарать те çерçие вĕçертсе ярать. Унтан çăвăнма пикенет. Урине чĕлхипе йĕпете-йĕпете питне-куçне сăтăркалать. Çерçи пăхрĕ-пăхрĕ те пăр-р! турĕ тет.

Çав вăхăтранпа кушак аçи апат умĕн мар, апат хыççăн питне çăвать тет.

Ăна кура ытти кушаксем те апатлансан тин çăвăнаççĕ.



**Предложенисем йĕркелесе çыр.**

1) Кушак, тытма, шăши, юратать.
2) Çиет, вăл, те, сĕт.
3) Çăвать, хыççăн, çинĕ, кушак, питне.



## Хресченпе упа

Пĕр хресчен вăрмана вутта каять. Ĕçлесе ывăнсан тунката çине канма ларать. Кĕтмен çĕртен ун патне упа тухать те мĕкĕрсе ярать:

— Эй, этем, атя иксĕмĕр тытăçса пăхар.

Пăхать хресчен упа çине. Ытла та пысăк-скер вăл — ăçтан çыхланан унпа.

— Тăхта, малтан санăн вăйна тĕрĕслесе пăхар, — тет ăна хресчен.

Вăл пуртă илет те тунката варринчен çурать. Унта савăл çапса лартать.

— Çак тунката тяппупа туртса çур. Вара эсĕ чăнах вăйли курăнĕ.

Упи шутламасăрах тяппине хушăка чикет. Хресчен савăла çапать те кăларать. Тунката



упа тяппине хĕстерсе хурать. Мĕкĕрсех ярать упа.

— Ну, мĕнле, кĕрешес шухăш пур-и? — кулать хресчен.

— Çук, — тет упа, — çыхланмастăп.

— Çапла çав. Вăйпа çеç мар, ăспа та çĕнтерме пулать, — тет хресчен.

**Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| пысăк | хăюллă | тĕттĕм | кахал |
| хăравçă | пĕчĕк | ĕçчен | çутă |

**Предложенисем йĕркелесе çыр.**

| | |
|---|---|
| Хураçка | чĕпсене сыхлать. |
| Марине | шăши тытать. |
| Кушак | ăслă йытă. |



## Икӗ шапа

(Испан халӑх юмахӗ)

Икӗ шапа ӑнсӑртран хӑйма чӳлмекне кӗрсе ӳкнӗ. Вӗсенчен пӗри ҫемҫешкерех те шиклӗрех пулнӑ. Вӑл кӑштах ишкеленӗ те ҫапла каланӑ:

— Манран пурпӗрех ишсе тухасси пулмасть. Мӗскер пустуй тапаҫланас? Путас та вилес!

Путнӑ вара вӑл.

— Ҫук, — тенӗ тепри, — путма эпӗ кирек хӑҫан та ӗлкӗрӗп-ха. Ишем пӗтӗм вӑй пӗтсе ҫитиччен...

Нумай иртнӗ-и вӑхӑт, сахал-и. Мӗн ку? Шапа хӑй айӗнче хӑйма мар, темӗнле хытӑ япала



пуррине туйнă. Пăхнă та хăй çу чăмăркки çинче ларнине курах кайнă.

Ише-ише шапа хăех çу ўкернĕ иккен! Çакă çăлса хăварнă та ăна.

? Пурнăçра хăш шапи пек пулма тăрăшмалла? Мĕншĕн?



**Предложенисем йĕркелесе çыр.**

1) Павлуш, вулать, юмах.
2) Шура, кăмпана, кайнă, Машăпа.
3) парать, Нина, апат, чăхсене.



**Ваттисен сăмахĕсем йĕркеле.**

| | |
|---|---|
| Авăртсан-авăртсан ... . | ăста пулнă |
| Шăтăка лекме çăмăл, ... . | çăнăх пулать |
| Ўркенмен ... . | тухма йывăр |

## Азбука

Мĕн амак? Мĕн чĕмере?
Ӳкнĕ азбука çĕре!

Урине хыт мăкăлтанă
Пысăк **М** сасă палли.
**И** кăштах çеç сусăрланнă,
Хуçăлнă-мĕн **Ж** алли.

**Ю** арканнă, тăлăх юлнă:
Ун çухалнă урлашки.
**У** пачах хӳресĕр пулнă:
Аякра ун татăкки.

Мĕскĕн **Ф** йăлт лутăрканнă:
Вуласа пĕлеймĕн тек.
**Р** ӳксе ӳпне йăваннă,
Халь — çемçелĕх палли пек.

**С** палла тупас тесессĕн
Тинкерсемĕр **О** çине.
**А** тăна кĕрсе çитсессĕн
Паллаймарĕ тус-йышне.

Ю. Тувим



Учебное издание

**Артемьева Тамара Васильевна**
**Волков Михаил Константинович**
**Сергеев Леонид Павлович**

**ЧĂВАШ БУКВАРĔ**

**ЧУВАШСКИЙ БУКВАРЬ**

Под общей редакцией кандидата
педагогических наук **М.К. Волкова**

Редакторы *Р.И. Крысина, А.Г. Владимирова*
Художники *И.В. Алексеев, М.Ю. Николаев,*
*П.Н. Сергеев, В.А. Смирнов*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректоры *З.И. Гаврилова, Е.П. Казакова*
Компьютерная верстка *Е.В. Ивановой, М.В. Филипповой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93 — 95 6600. Подписано к печати 30.08.12. Формат 70х90¹/₁₆. Бумага офсетная. Гарнитура Букварная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 11,7+0,29 форз. Тираж 4000 экз. Заказ № 1304. Изд. № 51.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография № 1»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.
www.volga-print.ru
Тел. (8352) 28-77-98, 57-01-87, факс 55-70-95.

Аа Аа Ӑӑ Ӑӑ Бб Бб Вв

Ёё Ёё Ӗӗ Ӗӗ Жж Жж Зз

Лл Лл Мм Мм Нн Нн Оо

Ҫҫ Ҫҫ Тт Тт Уу Уу Ӳӳ Ӳӳ

Чч Чч Шш Шш Щщ Щщ ъ ъ Ы

150-00

в Вв   Гг Гг   Дд Дд   Ее Ее

Зз Зз   Ии Ии   Йй Йй   Кк Кк

О Оо   Пп Пп   Рр Рр   Сс Сс

у   Фф Фф   Хх Хх   Цц Цц

Ыы Ыы   ь ь   Ээ Ээ   Юю Юю   Яя Яя